**Пасарта 40 тенкĕпе хуратул Республика Пуçлăхне те тупса параймарĕç... • 4 стр.**


*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

4(874) №, 2015, февраль/нарăс, 7

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



Вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ. **2 стр.**

Усал шыçăран хăтăлма пулать. **3 стр.**

Укçаллисене серепене сĕтĕреççĕ. **4 стр.**

Мунча мĕншĕн йĕпенет? Ăш пăтраннинчен сиплĕ курăк пулăшать. **8 стр.**

Хамран вăйлăрах арçын шыратăп... **9 стр.**

“Ашшĕ-амăшĕпе пĕр масарта выртакан – телейлĕ...” **10 стр.**

70 çула тăсăлнă шăплăх – “Освенцим” вилĕм фабрикинчен чĕррĕн тухнисем аса илеççĕ... **11 стр.**





Елена АТАМАНОВА сăнÿкерчĕкĕ.

*Аш пулсан хуплу тăвăттăмччĕ – çăнăх çук.*

Каларăш.




| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 07.02 | –15 | –16 |
| 08.02 | –12 | – 6 |
| 09.02 | – 3 | –10 |
| 10.02 | – 8 | –15 |
| 11.02 | –10 | – 7 |
| 12.02 | – 3 | – 3 |
| 13.02 | – 4 | –13 |

# Туслăхпа, юратупа, анчах – паспортсăр...

**Çынна телей, ырă кăна суннипе палăрса тăрать çак çемье. Кĕвĕçÿ, тарăху мĕнне пĕлмеççĕ вĕсем, нихăçан та никама та усал сунмаççĕ, вăрçăнмаççĕ, мула, пуянлăха та хапсăнмаççĕ, мĕн пуррипе чуна çырлахтарса, çĕнĕ кун килнишĕн савăнса пурăнма пĕлеççĕ. Мĕн пĕчĕкренех Турра ĕненсе тÿрĕ çулпа утма, çынна ырă кăна тума хăнăхнă вĕсем.**

Канаш районĕнчи Уçырма ял тăрăхне кĕрекен Кĕлтеçулĕнчи Козловсем патне хĕрарăмсен вырăнти канашĕн ертÿçипе Юлия Николаевнăпа кĕтмен çĕртен çитсе кĕни, тен, аванах та пулмарĕ, çапах та хапха алăкне уçнă май сакăр ача амăшĕн сăн-питĕнче кăмăлсăрланни палăрмарĕ, Валя аппа чĕнмен хăнасене урама тухсах кĕтсе илчĕ.

Алăк уратинчен кĕнĕ-кĕмен çемьери чи пĕчĕккисенчен пĕри кухньăри диван çине йăпăр-япăр хăпарса кайрĕ те ăшшăн çупăрласа питçăмартинчен чуптурĕ. Йĕкĕрешсенчен тепри залран чупса тухса мăйран уртăнчĕ. Шăпăрлансен шухăлăхĕ, палламан çынран кăшт та ютшăнманни кĕтменлĕх пулчĕ маншăн. «Ахальтен мар, апла ку çемьере юратупа туслăх хуçаланать», – текен шухăш вĕлтлетрĕ пуçра.

Пÿртре сăмсана кăтăклакан тин çеç пиçнĕ çăкăр шăрши сарăлнăччĕ. Космапа Дамьянăн çуралнă кунĕ иккен. Амăшĕ ир-ирех тăрса чуста хунă. Ашшĕпе амăшĕ вĕсене мула хапсăнман, çынсене ырă туса тĕлĕнтернĕ, чирчĕртен сыватнă çветтуйсен /3-мĕш ĕмĕр çурринче – 4-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче пурăннă/ ячĕсене панă. Шăпăрлансем 5 çул тултарнă-мĕн. Аван та мар пулчĕ, çын патне нихăçан та пушă алăпа кĕрекен марччĕ. Парне кайса туянма ялта хăть пĕчĕк лавкка та пулмарĕ. Мĕнех, ку тăрăхалла татах та çитĕпĕр-ха.


**“Чăваш хĕрарăмне” çитес çурçуллăхра илсе тăмашкăн йÿнĕ хакпа çырăнтараççĕ! Тĕплĕнрех – 3-мĕш стр.**



# «Ачисем лайăх, кинĕм ырă...»

**Пĕрисене пурнăç аслати çапнă йывăç пек шатăрах хуçать, теприсем шăпа темĕн тĕрлĕ асаплантарсан та парăнмаççĕ, малаллах ăнтăлаççĕ. Кулленхи пурнăçпа савăнма пĕлеççĕ. Ку чун пуянлăхĕпе те çыхăннă ахăр. Тен, сывăх çынсем хавхалантарнинче, инкекре пăрахманнинче, пĕр-пĕрне ăнланнинче пĕтĕм сăлтавĕ?**

Роза Алексеевна Канаш районĕнче Çĕнĕ Ахпӳртре çуралса ӳснĕ. 1982 çулта шăпа ăна Çĕрпӳ районĕнчи Метикасси ялне çитерет. Лавкка заведующийĕ ял çыннисене ĕçченлĕхĕпе, пуçарулăхĕпе тĕлĕнтерет. Ташă-юрăра та ăста, районта, хулара иртекен тĕрлĕ ăмăртура та палăрать. Ялта ун пек хĕрсене каччăсем тӳрех асăрхаççĕ. Шалчакасси йĕкĕчĕ те виçĕ çула яхăн çăлтăр шутланă хыççăн текех савнийĕсĕр пĕр кун та пурăнаймассине пĕлтерет. Валерипе Роза пĕрлешеççĕ, ялта пурăнма пуçлаççĕ. Метикассинчи вăтам шкулта ачасене хĕрĕх çула яхăн вĕрентнĕ Анна Григорьевна ывăлпа кинпе пурăнма тытăнать.

Ялта газ çук, çул та çук. Никамшăн та çĕнĕлĕх мар: çамрăксем хăйсем тĕллĕн, уйрăм пурăнасшăн. Çавăнпах мăшăр Чĕмпĕр облаçне каять. Тăрăшса ĕçленине кура виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер параççĕ вĕсене. Иван ятлă ывăл ӳсет. Пурнăç йĕркеленсе каять. Савăнса пурăнмалли вăхăтра телеграмма çитет. Анна Григорьевнăна операци тунă. Ыран-паян вилме пултараканскерне больницăран киле янă. Тăван тăрăха çитеççĕ кăна, Валерийĕн Пермь облаçĕнче пурăнакан пиччĕшĕнчен Генăран хăрушă хыпар килет: операци вăхăтĕнче тухтăрсем унăн çурăм шăммине амантнă. Вăйпитти арçын утайми-тăрайми пулнă. Инвалид урапи çине ларнăскере арăмĕ пăрахать. Амăшне курасшăн вăл. Икĕ хĕрĕнчен пĕринпе тăван яла çитет Гена.

Çывăх çыннисем вĕсен пулăшĕвĕсĕр пĕр кун та пурăнаймассине пĕлсе Валерипе Розăн ирĕксĕрех каялла таврăнма тивет. Кил хуçи Чурачăкра ĕçлеме пуçлать, Роза – бригадирта, склад заведующийĕнче. Ирхине пилĕк сехетре тухса каять те çĕрле вунă сехетре çеç таврăнать вăл. Тăвăтă çул тăр тăксан уйри ĕçе пăрахма тивет унăн: хунямăшне те, Генăна пăхмалла.

– Тăрăшсан, мăшăрпа пĕр-пĕрне ăнлансан ялта та пурăнма пулать, – тет сарă чечеке аса илтерекен хĕрарăм. – Упăшкам питĕ ĕçчен. Ĕне сума та тапăчкипех тухатăп, картишĕнче пылчăк таврашĕ çук пирĕн.

Юнашар ларакан пушă çуртсен çĕрĕсене те туяннă вĕсем. Пахча хыçĕнче кӳлĕ чавтарнă, унта пулă ĕрчетеççĕ. Йĕритавра сад ешерет.

Пăрчăкан пек чупса çӳрекен кил хуçи хĕрарăмĕсĕр пуçне Анна Григорьевнăпа та, унăн ывăлĕпе Геннадипе те калаçма тӳр килчĕ.



– Ачасем лайăх манăн, кинĕм ырă чунлă, – тет тирпейлĕ тăханнă хĕрарăм. – Вăл пулман тăк... Тавах, маттурскерне.

...Иван Григорьев вăрçăран аманса таврăннă. Каçхине вăййа тухсан шăллĕне хăйĕн вăрттăнлăхне пĕлтерет: «Итле-ха, Арçук, эпĕ кĕçĕр Анькка вăрласа кĕресшĕн. Пулăш-ха». Хĕрĕ яштака та çӳллĕ, уйăх пек çутă сăнлă. Каччă унран лутрарах, вăрçă суранĕ те кансĕрлет, хĕре пĕччен çĕклесе кĕме йывăр-çке-ха.

Пиччĕшĕпе шăллĕ вăйă хыççăн хĕре вăрласа кĕреççĕ. Ирхине Анькка тула вăрттăн тухать те пахча витĕр вăшт! çеç тарать. Килне пырса кĕрсен ашшĕ: «Ăçта çĕр каçрăн – çавăнта кай», – тет. Ĕлĕк йĕрке çирĕп пулнă вĕт. 2015 çулхи февраль уйăхĕнче Анна Григорьевна 90 çул тултарать.

Сăмах май, килтен ниçта тухмасăр ларакан Генăна çуралнă кунпа саламлама кинĕ хăй çӳрекен «Пилеш» фольклор ушкăнне чĕннĕ. Хавхалантарма тăрăшать хĕрарăм ăна.

Кил-çуртра тирпейлĕх хуçаланать: газ, вĕрипе сивĕ шыв, ванна, туалет, телевизор, компьютер... Хуларинчен те аванрах пуль. Ывăлĕ Иван шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухнă, ЧПУ пĕтернĕ. Халĕ Германире.

Çакăн пек пултаруллă хĕрарăмсем пур чухне пурнăç та илемлĕрех пек туйăнать.

**Лидия САРИНЕ.**

# Пурăнасчĕ-ха...

**Вăрăм ĕмĕрлĕ çынсем сайра пулин те – пурах. Хăшĕ-пĕри вара çĕр çула та чашт! кăна хыçа хăварать. Вăрмар районĕнчи Шитмĕшре çуралнă Ксения Егорова çак эрнере 103 çул тултарчĕ.**



Паян Кĕçени аппа Шупашкарта ывăлĕпе Анатолипе тата кинĕпе Валентинăпа пурăнать. Хăтлă хваттерте кăмăллă паллах. Пĕр ĕмĕр ытла кун кунланăскерĕн вара темĕн те курма-тӳсме тивнĕ. Хаяр вăрçă та, выçлăх та...

Пилĕк ачаран чи кĕçĕнни пулнă вăл. Ун умĕн çемьере тата тăватă ывăл кун çути курнă. Çамрăклах, вунсаккăртах, кӳршĕллĕ Сĕнтĕр каччипе Павел Павловпа çемье çавăраççĕ вĕсем. Тăвăтă ача çуратаççĕ, анчах иккĕшĕ çамрăклах çут тĕнчерен уйрăлаççĕ.

Хаяр вăрçă пуçланать... Çамрăк арăм ытти пин-пин хĕрарăм пекех мăшăрне вăрçă хирне ăсатать. Анчах Павел Никитьевич тăван тăрăха таврăнаймасть, паттăрла çапăçса вилнине пĕлтерекен хут çеç килет. Вăрçă чарăнсан темиçе çултан пĕччен йывăр килнĕрен Ксения Егоровна Вăтакасри Трофим Семеновпа пĕрле пурăнма тытăнать, ăна килне кĕртет. Арçыннăн та малтан урăх çемье пулнă, анчах мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Çапла тата икĕ ывăл кун çути курать. Кĕçĕнни Юрий тăван ялтах тĕпленнĕ. Асли – Шупашкарта. Шăпах ун патĕнче пурăнать те вăрăм ĕмĕрлĕ хĕрарăм. Мăшăрĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тивĕçнĕ вăрçă ветеранĕ, 1990-мĕш çулта ĕмĕрлĕхех куçне хупать.

Ĕç ветеранĕ ĕмĕрĕпех хăмла пахчинче тăрăшнă. Çĕлеме ăстаскер пушă вăхăтра ял халăхĕ валли кĕпе-тумтир янтăланă.

– Çи-пуç енчен нуша питех курман темелле. Темле пулсан та çĕвĕçсем укça ĕçлесе илнех. Çынсем валли карттусран пуçласа çурăм ăшши, фуфайка таранччен çĕлетчĕ анне, – тет Анатолий Трофимович. – Киввисене пăсса та тухăçлăрах çĕннине янтăлатчĕ анне. Çынсене те пĕр тума сӳтсе теприне ăсталаса паратчĕ. Ыйтакан нумайăшпе çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмасăр тепĕр чухне çĕр каçа икĕ-виçĕ фуфайка çĕлени те пулнă.

Сăмах май, Ксения Егоровна амăшĕ Дарья аппа та нумай пурăннă, çĕре темиçе çул çеç çитеймен. Амăшĕпе хĕрĕ кӳршĕ ялсен хушшинче тăватă-пилĕк çухрăм çеç пулнăран пĕр-пĕрин патне час-часах çӳренĕ. Ксения Егоровнăн ашшĕ те фронтран таврăнайман. Пиччĕшĕсем вут-çулăмран чĕрĕ-сывах тухнă, шел те, ĕмĕрĕсем вăрăм килмен.

– Сантăр пиччĕшĕ питĕ ĕçлеттернине каласа кăтартатчĕ анне. Пĕрре те ахаль лартмастчĕ тетчĕ. "Санăн паян икĕ çăпата авмалла", – калатчĕ тет çирĕппĕн. Лаша тытма та яратчĕ тет, – амăшĕ йывăр кун-çулне каласа кăтартнисене ывăлĕ те манмасть.

– Çын укçа-тенкĕпе мар, ĕçĕпе, сăпайлăхĕпе, ырă та уçă кăмăлĕпе, тасалăхĕпе, çынна юратнипе пуян. Шăпах çак сăлтавсем вăрăм ĕмĕрлĕ пулма пулăшаççĕ те ахăр. Çынсемпе анне яланах кăмăллă хутшăннă, ял çинче вăрçса çӳремен. Çемьере те лăпкă пулнă пирĕн. Атте те, анне те хаяр çынсем мар. Хăйне тытма пĕлет çывăх çыннăмăр, çын сăмахне те йывăра илсе тарăхмасть. Панă кунпа çырлахса кун кунлать. Çавăнпах вăрăм ĕмĕрлĕ пулĕ те, – тет Анатолий Трофимович.

Пурăнас кăмăлĕ пысăк хĕрарăмăн. Паллах, çулсем иртеççĕ, сывлăхĕ кăштах хавшать. Апла пулин те малашлăх пирки ĕмĕтленет вăл.

– Ывăлăмпа кинĕм лайăх пăхаççĕ, çавăнпа татах пурăнасчĕ-ха, – тет Ксения Егоровна. Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарасса кĕтет вăл, мăнукĕсемпе, кĕçĕн мăнукĕсемпе, вĕсен ачисемпе савăнать.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

## ЫЙТĂМ

**Вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши? Турă паниши çакă е хамăртан килекен пуянлăх-ши? Çак ыйтупа тĕрлĕ ӳсĕмри çынсене чăрмантартăмăр.**

**Алина НИКОЛАЕВА, 22 çулта:**

– Шкулта вĕреннĕ чухнех ĕмĕр вăрăм пултăр тесен сывă пурнăç йĕркине пăхăнмаллине калатчĕç. Атте-анне те çавнах вĕрентнĕ. Вĕрентекенсем уйрăмах арçын ачасене туртнă кашни сигарет пурнăçăн 15 минутне илсе кайнине асăрхаттаратчĕç. Пĕр енчен, çакă тĕрĕс те пулĕ. "Хускану – пурнăç" тесе те ахальтен каламаççĕ. Тепĕр енчен, пĕтĕмпех хамăртан килмест-çке. Шăпа тени те пур.

**Вера АНАТОЛЬЕВА, 52 çулта:**

– Сывлăх хавшасан, вăй-хал çитмесен киревсĕр йăласенчен темле пăрăнсан та çĕр çула çитеймĕн. Çитмĕлтен иртсен те тем пекехчĕ.

**Анфиса СТЕПАНОВА, 60 çулта:**

– Эпĕ шкулта ĕçленĕ. Спорт ăмăртăвĕсене хутшăннă. Пăшал перес енĕпе мала тухнă. Халĕ те куç çивĕч. Çĕнĕ кашни куна зарядкăран пуçласси йăлара. Паллах, сывă пурнăç йĕркине тытса пымалла. Канлĕ çывăрмалла. Унсăр пуçне тухса çӳремелле, çынпа хутшăнмалла. Эпĕ, Шупашкарта тĕпленнĕскер, Элĕк районне тăтăш кайса килетĕп.

**Анатолий ВЛАСОВ, 69 çулта:**

– 45 çултанпах пирус туртатăп, 70 тултарсанах усал çак йăларан хăпăп-ха та. Ĕçрен хăраман, ырă кăмăллă, тĕрĕслĕхе мала хуракан çын нумай пурăнать. Эпĕ, сăмахран, çулла икĕ дачăра пахчаçимĕç лартса ӳстеретĕп.

Çемьере килĕшӳ хуçалансан çеç чунра канлĕ. Арăмĕпе упăшкин пĕр-пĕрне юратмалла. Ачисемпе мăнукĕсене тĕслĕх кăтартмалла. Тĕрĕссипе, манăн çак самантра транспорт чарăнăвĕнче каласа тăма та вăхăт çук. Мăнуксене бассейна, ӳнер шкулне ăсатмалла.

Эпĕ – вырăс, çапах та чăвашла лайăх пĕлетĕп. Мăнуксене те икĕ чĕлхепе таса калаçма хăнăхтаратăп.

**Валентина СЕРГЕЕВА, 74 çулта:**

– Атте вăрçăра вилнĕ, анне 96 çулчченех пурăнчĕ. Пирĕн йăхрисене вăрăм ĕмĕрлĕ теççĕ. Аппа та 88 çула çитрĕ, аптрамасть-ха, пĕччене пурăнать. Халиччен эмел ĕçсе курман вăл, куракĕсемпе кăна сипленет. Нушине те самаях тӳсрĕ, ачисене арçынсăрах çитĕнтерчĕ. Ĕç мар, хуйхă-суйхă ватăлтарать çынна. Нумай пурăнас тесен хăв çинчен ытларах шухăшламалла пуль, çын сăмахне хăлхана чикмелле мар. Пĕрмай чĕре çывăхне илсе кулянни сывлăха çеç хавшатать.

**Лидия ТИМОФЕЕВА, 63 çулта:**

– Хам пурнăçра операци сĕтелĕ çине темиçе те выртма тӳр килчĕ. Пурăнатăп-ха, 100 çула çитме ĕмĕтленетĕп. Эпĕ пуçа усаканни, часах пăрахаканни мар.




САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ăçта-ши çав юмах тĕнчи?

Елена АТАМАНОВА

**Кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне уроксем хыççăн тепĕр виçĕ-тăватă сехетлĕхе шкула килти ĕç тума хăваратчĕç. Вăхăта усăллă ирттернĕ унта, киле парса янă ĕçсене пурнăçланă хыççăн вылянă, уçă сывлăша тухнă. Анчах та пуринчен ытларах вĕрентекен кашни кун юмахсем вулани асра юлнă. Тăхтав вăхăтĕнче пĕрмай парта тăрăх чупакан харсăр ачасем те шăпланса юмах тĕнчине путатчĕç. Ун чухне вулавăш та чухăнрах пулнă, хальхи пек кашни кĕтесре кĕнеке те сутман. Чухăнрах пулнă тени тĕрĕсех те мар пуль-ха, кăсăклă тата шкул программине кĕртнĕ произведенисем выртнă çӳлĕксем çинче. Кĕнекине алăран ямасăр, пĕрпĕринпе ăмăртса вулакан ачасем нумайрах пулнă ун чухне, çавăн пекех ял шкулĕсенче хальхи пек пĕрремĕш класра виçĕ-тăватă ача çеç ларман.**

**Ачалăхранах юлнă пуль çав: кĕнеке лавккине питĕ юрататпăр эпир, ĕç хыççăн унта халĕ те час-часах кĕретпĕр. Кану кунĕсенче те айккинчен пăрăнса утмастпăр. Чи малтан ача-пăча юмахĕсен çӳлĕкĕ умĕнче чарăнса тăратăп. Таçтан илĕртекен, илемлĕ хуплашкаллă кĕнекесем çинчен куçа илейместĕп. Хитри хăй патне туртатех çав. Мĕн ятли кăна çук-ши? Ачан кăна мар, мăн çыннăн та туянса вулас килĕ.**

**Хальхи кĕнекесен хучĕ паха, ӳкерчĕк те питĕ нумай. Пĕчĕккисене вулама лайăх пултăр тесе шултра саспаллисемпе пичетленĕ. Пĕчĕкреххисем валли ятарласа сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн шĕкĕлчемелли юмахсем те туллиех. Анчах та тем хулăнăш, йывăр кĕнекере чи нумаййи те 10-15 юмах çеç. Çитменнине – тахçанах йăлăхтарса çитерме ĕлкĕрнисем. «Маша и медведь», «Три медведя», «Репа» юмахсем пур кĕнекере те тĕлпулаççĕ. Шăпăрлансем вĕсемпе 1-2 çултах паллашма ĕлкĕреççĕ. Çак çӳлерех асăннисен çумне тепĕр 3-4 юмах хушнă та юмах пысăк кĕнеки пулса тăнă. Хакĕ вара 300-400 тенкĕрен кая мар. Çук, ыйтăвĕ укçатенкĕре те мар, лайăххишĕн, килĕшекен кĕнекешĕн пачах та шел мар, шалта пушши вара кирлĕ мар.**

**Тата тепĕр çитменлĕхе те асăнса хăварас килет. Сăмахран, «Теремок» юмаха илĕпĕр. Кашни кĕнекерех тĕрлĕ вариантлă вăл. Упа пĕр юмахра пӳрте урипе тапса çĕмĕрет, тепĕр тĕлте вара хăпарса ларать те ишсе антарать. Юмахсен сюжечĕ кашни кĕнекере расна. Çакă нимĕнпе те пуянлатмасть паллах. Темиçе варианта вуласа ача арпашăнса-пăтрашăнса кăна пĕтет. Юмах содержанине ыйтсан хăш сюжетне суйласа илмеллине те пĕлмест. Ача садĕнчи воспитательница каласа кăтартнă тăрăх, пĕчĕккисене те килĕшмест çакă, тавçăруллă та харсăртараххисем «ун пек мар, анне урăхла вуласа панăччĕ ку юмаха» тесе тавлашаççĕ-мĕн.**

**Йăнăшсене асăрхас мар тесен те куçа тăрăнаççех. Кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте чарăну палли лартса тултарни, саспалли сиксе юлни час-часах тĕлпулать. Вулама вĕреннĕ ача çак йăнăшсене ăша хыватех, кĕнекере мĕнле, çавăнти пекех çырма тăрăшать. Вăт, хитре хуплашкаллă, паха хутлă кĕнеке!**

**Акă алла «Красавица и чудовище» ятлă юмах кĕнеки лекрĕ, юнашарах – «Спящая красавица». Иккĕшне те Мускаври пĕр издательствăра кăларнă. Уçса пăхрăм та – пĕрешкел юмахсемех, хуплашка çинчи ячĕсемпе ӳкерчĕкĕсем кăна расна.**

**Ачасемшĕн кăсăклă мар тата тăрук, кĕтмен çĕртен е ăнланмалла мар вĕçленекен çĕнетнĕ юмахсем купипех. Хальхи хăш-пĕр йăлăхтармăш юрăсем пекех пачах та асра юлмаççĕ хăйсем.**

**Кĕнекесем кăларакан издательствăсен шучĕ те çук юлашки вăхăтра. Пахалăх пачах та интереслентерместши вĕсене? Патшалăхăн санитарипе эпидемиологи йĕркисемпе нормативĕсене пăхăнмасăр кăларса тултарни те сахал мар.**

**Хăш-пĕр кĕнекере юмах тексчĕсем ӳкерчĕксем çинчех, çавăнпа вуланă чухне лайăх курăнмасть тата хăвăрт ывăнтарать. Паллах, ачан куçне япăхлатать çакă.**

**Тахçанхи юмах кĕнекисем питĕ хулăнччĕ. Вĕрентекене çулталăк тăршшĕпе вуласа памалăх та çитетчĕ. Ӳкерчĕксем çукпа пĕрехчĕ унта. Темшĕн-çке кĕнеке мĕнле хутпа, мĕнле хуплашкапа тухни кирлех те пулман ун чухне пире, ытларах юмахĕ интереслентернĕ. Сарă тĕслĕ, ахаль хаçат хучĕпе кăларнă кĕнекесене те шкул ачисем пĕр-пĕринпе ăмăртса, черетленсе вуланă.**

**Ырăпа усала уйăрма вĕрентекен халапсем вуласа çитĕннĕ эпир. Ун чухне хальхи пек укçашăн хапсăнса мар, ачана аталанма, ырри патне туртăнма, лайăххине уйăрса илме вĕренччĕр тесе кăларнă вĕсене. Хальхи ачасене те çав юмахсенех вулаттарас килет...**

ÇУРТ-ЙĔР

# Мăнаçланмалăх пурах

**Февралĕн 2-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев строительство организацийĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ, иртнĕ çулхи ĕç-хĕле тишкернĕ. Çĕнĕ предприятисем уçнипе, çĕнĕ проектсем хута кайнипе, республикăра кăна мар, унăн тулашĕнче те усă куракан таварсем туса кăларнипе мăнаçланмалăх пурах. Çавăнпах Михаил Васильевич отрасль ĕçченĕсене мухтаса тав тунă.**

2014 çулта республикăра 36,15 млрд тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă. 862,1 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута янă. Нумай хваттерлĕ çуртсен лаптăкĕ – 458 пин тăваткал метр. Пĕр çын пуçне пурăнмалли кĕтес тăвас енĕпе республика федерацин Атăлçи округĕнче мала тухнă. Чăваш Енре ку кăтарту 0,696 тăваткал метрпа танлашать, федерацин Атăлçи округĕнче вăтамран – 0,566 тăваткал метр.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

СЫВЛĂХ

# Усал шыçăран хăтăлма пулать

**Февралĕн 4-мĕшĕнче Усал шыçăпа кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери куна паллă тăвасси йăлана кĕчĕ. Çавна май январĕн 16-мĕшĕнче республикăра «Эпир пĕрле çĕнтерĕпĕр...» уйăхлăх пуçланчĕ. Январĕн 24, 31-мĕшĕсенче тата февралĕн 4, 7-мĕшĕсенче онкологи диспансерĕнче уçă алăксен кунĕ ирттересси пирки халăха малтанах пĕлтерчĕç. Кĕске вăхăтрах «хĕрӳ лини» телефонĕпе 2 пин ытла çын специалистсем патĕнче тĕрĕсленмешкĕн çырăнма ĕлкĕрчĕ.**

Шурă халатлисем ун чухлĕ çынна харăсах йышăнма пултараймаççĕ. Çавăнпах вырăнти поликлиникăсенчи онкологи пӳлĕмĕсенче те канăççăрлантаракан ку е вăл ыйтăва татма май пур. Унтах тĕрĕсленме пулать.

Усал шыçăпа кĕрешмелли кун республикăри онкологи диспансерĕнче регионсен хушшинчи «Эпир пĕрле çĕнтерĕпĕр...» форум уçăлнă. Ку ĕçе 200 ытла çын – пациентсемпе медицина ĕçченĕсем – хутшăннă.

Усал шыçăпа аптăракансене пулăшакан общество юхăмĕн «Пурнăçшăн» проекчĕ çинчен те асăнса хăварас килет. Вăл грант укçипе пурнăçланса пырать.

Форума республикăри Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Ольга Зайцева уçнă. Пурнăçшăн пĕрле кĕрешмеллине палăртнă вăл. Ыр кăмăллăх фончĕн пуçлăхĕ Лариса Игнатьева та пĕрле пур йывăрлăха та çĕнтерме май пурри çинчен каланă.

«Республикăра усал шыçăллă 23 пин ытла çынна шута илнĕ. Ку пирĕн тăрăхри пĕтĕм халăхăн – 2 процентĕ. Халĕ медицина çĕнĕ йышши оборудованийĕ чире çийĕнчех палăртма май парать», – тенĕ ЧР сывлăх сыхлав министрĕн çумĕ Наиля Зинетуллина.

Çакăнтах «çавра сĕтел», ăсталăх класĕ, сывлăх шкулĕ йĕркеленĕ. Усал шыçça çĕнтернисем «Пурнăçшăн» проектра ĕçленине, ыттисене пулăшнине хавхаланса каласа кăтартнă.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

# Пахалăхлă та, йӳнĕрех те

**Çак эрнере Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев муниципалитет, хула, республика, федераци шайĕнчи медицина учрежденийĕсен тĕп тухтăрĕсемпе, общество организацийĕсен представителĕсемпе тĕл пулнă. Паянхи условисенче çынсене пахалăхлă пулăшупа тата эмелсемпе тивĕçтерес ыйтăва сӳтсе явнă.**

Экономикăри кăткăслăха шута илсен 2015 çул медицинăшăн та çăмăл пулас çуккине асăрхаттарнă Михаил Васильевич. Анчах кулянма иртерех-ха. Ара, юлашки çулсенче сывлăх сыхлавĕн тытăмĕ çĕнелсе улшăнать-çке. Çакă модернизаци программи ăнăçлă пурнăçланнипе те çыхăннă. Çав вăхăтрах çынсемпе йĕркеллĕ хутшăнмаллине те аса илтернĕ Михаил Васильевич.

– Пĕр енчен паха ĕç нумай пурнăçлатпăр, тепĕр енчен – пациентсем кăмăлсăрланнине палăртаççĕ, – тенĕ ЧР Пуçлăхĕ.

Сывлăх министрĕ Анна Самойлова халăха психологи пулăшăвĕ памалли, çынсене сывă пурнăç йĕркине тытса пымашкăн хавхалантармалли çинчен каланă. Тухтăрсен умне лартакан малтанхи тĕллевсен йышне вăл çынсене хамăр çĕршывра туса кăларнă эмелсене ĕçтерме хăнăхтарассине кĕртнĕ. Ют çĕршыврисенчен йӳнĕрех вĕсем, пахалăхĕпе вара нимĕнпе те кая мар. Çав вăхăтрах эмел туса кăларакансене те хавхалантармаллине каланă вăл. Иккĕмĕш тĕллеве çапла палăртнă: пурнăçшăн уйрăмах кирлисене аптекăсенче ятарлă витрина çине кăлармалла.

– Эпир пациентшăн тăрăшатпăр. Вăл – пирĕн ĕç тĕллевĕ. Çавăнпах унпа клиент пек, пирĕн ĕçĕн потребителĕ пек хутшăнмалла. Медицина пулăшăвĕн пахалăхне ӳстерессишĕн хамăрăн та улшăнмалла: çĕнĕ мелсене тишкермелле, информаци технологийĕсемпе усă курмалла, тытăма çĕнетмелле. Çав вăхăтрах çынсемпе çыхăну йĕркелемеллине те манмалла мар, – аса илтернĕ Алла Самойлова.

**Татьяна НАУМОВА.**

# Йӳнĕлле çырăнма васкăр!

**Хаçат-журнала 2015 çулăн иккĕмĕш çуррине илсе тăмашкăн**

***февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшĕччен***

**иртнĕ çур çулти хаксемпе çырăнтару иртет. Çак тапхăрта "Хыпар" Издательство çурчĕн пур кăларăмне те йӳнĕрех хакпа çырăнма пулать.**

| Кăларăмсем | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 737,70 | 288 | 279 | 144 |
| * Хыпар-эрнекун | 78353 | 321,96 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 375,96 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 340,44 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 215,4 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 192,66 | 114 | 111 | 81 |
| ** Хресчен сасси | 54838 | 280,92 | 168 | 162 | 114 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | 24608 | 161,52 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 310,92 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | 54847 | 743,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 256,92 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |

**Июлĕн 1-мĕшĕнчен "Хыпар-шăматкун" хаçат "Хыпар-эрнекун" ятпа тухма пуçлать.*

*** "Хресчен сасси - Кил" иккĕмĕш çур çулта уйрăммăн пичетленмест. Малашне "Хресчен сасси" хаçат эрнере пĕр хутчен 8 страницăпа вулакан патне çитĕ.*





ХАКСЕМ

# Республика Пуçлăхне 40 тенкĕпе хуратул тупса параймарĕç...



**Апат-çимĕç хакĕсем палăрмаллах ӳсни пирки хаçатра çырсах тăратпăр. Çак ыйту "çӳлтисене" те канăç паманни куçкĕрет. Кĕçнерникун республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти суту-илӳ предприятийĕсенче пулчĕ.**

Тĕп пасара çитсен чи малтан çăкăр киоскĕ умĕнче чарăнчĕ. Михаил Васильевич куçĕ умне тӳрех пĕчĕк çитменлĕхсем тĕлпулчĕç, çавăнпа сутуçăсене асăрхаттармасăр чăтаймарĕ вăл. Киоск умĕнчен пăрăнсанах республика Пуçлăхне çынсем сырса илчĕç. Хваттершĕн ытла та нумай тӳлени, хаксем кăмпа пекех ӳссе кайни тата вак-тĕвек ытти ыйтăва хускатрĕç. Пĕр кинеми эмелсем хакланни, хăйне куллен кирлĕ валидол 9-тан 24 тенке çитни пирки куççуль витĕр калаçрĕ. Михаил Игнатьев экономика аталанăвĕн министрне Владимир Аврелькина çак эмелĕн "Фармаци" тытăмĕнчи валидол хакĕпе кăсăкланма сĕнчĕ. Тĕрлĕ ыйту пама именмен халăха: "Пурнăçа лайăх енне улăштармалла, лайăхрах ĕçлеме тăрăшмалла. Качча кайманнисен мăшăрланмалла, çемьене тытса тăма пултаракан арçын тупмалла", – пусарсах каларĕ Михаил Васильевич.

Пасар çывăхĕнче пурăнакансене ял çыннисем сĕттăпăрча, пахчаçимĕçе урамрах сутни канăç памасть: çуртсен таврашĕнче вараласа хăвараççĕ-мĕн. "Ача-пăча тĕнчи" енчен утса кĕмелли тĕп çул хĕррипе косметика хатĕр-хĕтĕрĕ сутса тăни те вĕчĕрхентерет çынсене: каç еннелле курупкасемпе картон хутсем выртса юлаççĕ.

Муркаш районĕнчен килнĕ кинеми пасар кĕпе-йĕм, тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕр сутмалли вырăна çаврăннăшăн кулянать. "Вĕсене кунтан хăваласа кăларса ямалла, колхоз пасарĕнче апат-çимĕç кăна пулмалла", – хăй шухăшне палăртать ватă.

"Кунта хамăр патра туса илекен апат-çимĕç ытларах сутмалла, ял çыннисене çул уçса памалла. Пасар директорĕ Сергей Рубцов каланă тăрăх, ялтисем валли пасарта вырăн çитет. Йӳнĕ вырăнсем те пур – 30 тенкĕ çеç тӳлемелле", – уçăмлатрĕ Михаил Васильевич.

Михаил Игнатьев суту-илӳ речĕсен хушшипе çӳренĕ май тăварланă купăста, чечексен хакĕпе те кăсăкланчĕ. Доллар ӳснĕ май, Голландирен илсе килнĕ куçа йăмăхтаракан кĕлчечексем 1,5 хут хакланнă. "Туянаççĕ, чечек аван сутăнать", – пуç усмаççĕ сентре умĕнчи пикесем.

Тăпăрчă хакĕ те интереслентерчĕ Чăваш Ен Пуçлăхне. 180-200 тенкĕпе туянма пулать ăна паян. Темиçешер ĕне усракан Муркаш тăрăхĕн чиперукĕсене Михаил Васильевич тав турĕ, çăмăл мар ĕçре ăнăçу сунчĕ.

Тĕрлĕ апат-çимĕçрен хатĕрленĕ хăйне евĕр "пурăнма кирлĕ карçинкка" патĕнче те чарăнса тăчĕ республика Пуçлăхĕ. Унта кĕрпе, какай, сыр, сĕт, чей, тип çу, çĕрулми, кишĕр, çăкăр кĕрет. Владимир Аврелькин министр каланă тăрăх, октябрьтипе танлаштарсан çав карçинкка 16% ӳснĕ. Михаил Васильевича вара хуратул кĕрпи хакĕ кăсăклантарчĕ. Министр 1 килограмне 40 тенкĕпе туянма пулнине палăртрĕ.

"Пулма пултараймасть. Шыраса пăхăр-ха, тупаятăр-и?" – сĕнчĕ Пуçлăх.

Экономика аталанăвĕн министрĕ пасара йăлтах айăн та çийĕн çаврăттарнă хыççăн хайхи "40 тенкĕ" тесе çырнă хуратул хутаçне, чăн та, тупса килчĕ. Михаил Васильевич та тĕлĕнчĕ, лайăхрах пăхрĕ те – виçи 700 грамм çеç иккен! Министр нимĕн те чĕнеймерĕ, хуратула ăçтан илнĕ – çавăнта каялла леçмелли кăна юлчĕ.

Аш-какай хакĕ тĕлĕнтерчĕ. Нумай пулмасть кăна кĕрсе тухнăччĕ те – йӳнĕ какай ун чухне куç тĕлне пулманччĕ. Кĕçнерникун вара шăмăсăр пăру ашĕ те 300 тенкĕ çеçчĕ. Республика Пуçлăхĕ пырассине пĕлсе цифрăсене ятарласа улăштарман-ши? Мĕнех? Ӳркенмесĕрех хаксемпе кăшт каярах – Пуçлăхсăр – тепре кайса паллашни чăрмантармасть.

Тĕп пасартан тухнă хыççăн Михаил Игнатьев "Магнит" сечĕн Энгельс урамĕнчи пысăк лавккине çул тытрĕ. Шупашкар эрехĕ ыттисенчен чылай йӳнĕрех пулнине ырланă май сĕт хутаçĕсене тытса пăхрĕ. Лавккан хушма хакĕ 3-5% кăна пулин те Чăваш Енри предприятисемех сĕте тĕрлĕ хакпа сутнине палăртрĕ.

Республика Пуçлăхĕ умĕнче лавккана, кунти хаксене, таварсене ытлашшипех мухтакан кинемисем ятарлă клиентсем пекех туйăнчĕç. Михаил Игнатьева кĕтнĕ курăнать кунта.

Трактор тăвакансен проспектĕнчи "Сахарок" лавккари сутуçăсем ăш пиллĕн кĕтсе илчĕç. Тавар туянма килнĕ кинеми хăйĕн карçинккинчи апат-çимĕçпе паллаштарчĕ те чăх туянма укçи-тенки çитейменни пирки каларĕ. Кăштахран çак кинемиех... тин çеç пуснă выльăх ашне илме хирĕç маррине пĕлтерчĕ. Темле ăнланмалла ĕнтĕ кинемие – тин çеç чăх валли те укçи çукчĕ... Михаил Васильевича хăйĕн икĕ пахча пулни пирки, кĕркунне панулмие ниçта чикейменни çинчен те каласа кăтартрĕ вăл. Иртнĕ çул çимĕçе ача çуртне те, реабилитаци центрне те, кӳршисене те кайса панă. "Ытлашши продукцие йышăнакан пунктсем кирлĕ", – хăюллă кинеми хăй шухăшне палăртсах каларĕ. Михаил Игнатьев панулмирен кĕркунне сĕткен ытларах юхтарма сĕнчĕ.

"Лавккасенче ассортимент çителĕклĕ. Чăн та, хаксем тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ. Çăкăра 21-пе, 17, 18 тенкĕпе туянма пулать. Сĕт те çавнашкалах. Халăха тивĕçлĕ информаци памалла. Ăçта тавар мĕн хак пулнине пĕлсен вăл йӳнĕрех хине суйласа илейтĕр", – пĕтĕмлетрĕ юлашкинчен Михаил Игнатьев.

**Елена АТАМАНОВА.**
ЧР ПА сайтĕнчи сăнӳкерчĕк.

НАРКОТĔРĔСЛЕВ

# Укçаллисене серепене сĕтĕреççĕ

**Виçĕмкун РФ наркотĕрĕслев службин Чăваш Енри управленийĕн ертӳçи Евгений Барсуков журналистсемпе тĕл пулчĕ, 2014 çулти кăтартусемпе паллаштарчĕ.**

Паянхи куна республикăри управлени наркотиксен çаврăнăшне тытса чарас ĕçĕ-хĕлĕпе ыттисен хушшинче ырă енпе палăрнине асăнма кăмăллă. Федерацин Атăлçи округĕнче 14 регионтан – 3-мĕш, Раççейри 78 субьект йышĕнче – 34-мĕш вырăнта вăл. Йышпа тунă преступленисене тытса чарассипе те 2-мĕш кăтартупа палăрнă тата ытти те. Ĕç курăмлăхĕ пурах. Çавăнпах рейтингпа паллаштарнинчен пуçларĕтĕр сăмахне Евгений Николаевич.

Хăш-пĕр чухне рейтингăн аялти картлашки çинче пулни аван та иккен. Акă, сăмахран, героин тупассипе республика палăрмасть. Çакăншăн Евгений Николаевич савăнать кăна. Чăваш Енре унпа ытлашши алхасманнине пĕлтерет-çке ку.

– Ку кăтартусем пĕтĕмпех – пирĕн ĕçе хаклаканнисем. Чăннипех те вĕсене чылай пурнăçлатпăр, анчах пирĕн пата ачисене ертсе килекен амăшĕсемшĕн вĕсем пачах та интереслĕ мар, – терĕ Евгений Барсуков.

Наркăмăшланакансен йышне чакарас тĕллевпе республикăра икĕ çул ĕнтĕ аптекăсенче психотроплă япаласене сутма чарнă. Ку йĕркене хальлĕхе Раççей субьекчĕсен пĕчĕк пайĕ çеç йышăннă. Унтан-кунтан тепĕр чухне йĕркене пăсакансем тупăнаççĕ иккен, анчах кун йышшисене асăрхасах тăраççĕ.

Тивĕçлĕ шайра ĕçленине кура наркотиксене почта урлă салатасси те пăрахăçа тухса пырать. Çапах тимсĕр пулма юрамасть, ăна салатмалли тĕрлĕ çĕнĕ мел тупăнсах пырать-çке.

2014 çул сентябрьте психотроплă çĕнĕ йышши япала – спайс – сарăлнипе, тĕрлĕ регионта вун-вун çамрăк вилнипе асра юлать. Çĕнĕ йышшисем яланах чи малтан хĕрупраçпа яш-кĕрĕм пухăннă вырăнта сарăлнине асра тытмалла.

Иртнĕ çул Чăваш Енре синтетикăллă чи пысăк наркăмăш тупнă – 8 кг. Çав вăхăтрах хăш-пĕр наркотикăн 0,05 грамĕ те пысăк виçе шутланать.

Паллах, наркотĕрĕслев службинче тăрăшакансен пысăк тĕллевĕсенчен пĕри – дезоморфин притонĕсене тупса аркатасси. Ку амак çын организмне çулталăкра пĕтĕмпех çĕртсе кăларать. Эмелсене нумай тĕпченĕ хыççăн вĕсен тытăмĕнче кодеин пуррисене сутма та чармашкăн йышăннă.

– Çапах та ĕçлесе çитерейместпĕр-ха. Те, ку эмелсене сутма пăрахман аптекăсем пур, те урăх регионтан килеççĕ, – терĕ Евгений Барсуков иртнĕ çул дезоморфинпа наркăмăшланнă 100 яхăн çынна шута илнине палăртнă май.

Çав вăхăтрах хăш-пĕр кăтарту пĕчĕкленнĕ. Акă 2014 çулта нарколог патĕнче 21 çынна пĕрремĕш хутчен шута илнĕ. Çав вăхăтрах профилактика шутĕнчисен йышĕ ӳснине те асăнмалла – 528 /2013 çулта – 444 çын/. Наркотике пула Канашра 1 çын вилнĕ.

Юлашки вăхăтра наркăмăш авăрĕнчен тухнă çынсемпе тĕплĕ ĕçлемелли пирки пусăм тăваççĕ. Çĕрпӳри ятарлă учреждени пирки уйрăм сăмах пулчĕ. Раççей саккунне пăснă хĕрарăм наркомансем валли пĕртен-пĕрре вăл. Халĕ унта 800 яхăн хĕрарăм, 600-шĕ – наркоман. Ирĕке тухас умĕн вĕсемпе психологсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Хĕрарăм ăçта каяссине, мĕнле ĕçе вырнаçма пултарассине палăртаççĕ. Сăмах май, журналистсене шăпах чиртен хăпнисене общество йышăнманни, лайăх ĕçе вырнаçасси йывăрлăх кăларса тăратни канăçсăрлантарчĕ. Чăннипех те çаплах мар-и? Çавăнпах реабилитаци енĕпе çине тăрса ĕçлемелле.

ШĔМпе тачă çыхăнса ĕçлени те курăмлă. Республика историйĕнче ку таранччен кун пекки пулман – 210 статьяпа икĕ приговор йышăннă иртнĕ çул. Йĕркеленнĕ преступнăç пĕрлешĕвĕсен чи çӳллĕ шайĕпе çыхăннă вăл.

– Çын наркотикрен тĕппипех сывалма пултарать тени – тĕрĕс мар. Йăнăш информаци хăрушлăхĕ пысăк – сывалма пултарнине пĕлсен ăна тутанас текенсен шучĕ те ӳсет-çке, – асăрхаттарчĕ Евгений Барсуков.

Пулăç пулăçа таçтанах курать тенешкел, эрех ĕçекен те, наркăмăшпа айкашакан та хăйĕн пеккисене таçтанах тупать. Çавăнпах вĕсене тĕрĕслесех, асăрхасах тăмалла. Унсăр пуçне наркотик авăрне лекнисен хăйне евĕрлĕхĕ – усалĕ – те пур иккен. Вĕсем хăйсем хыççăн ыттисене туртма тытăнаççĕ. Калăпăр, героин серепине çакланнисене 3-4 пин тенкĕ кирлĕ. Кунне! Кун пек нухрат республикăра çуках. Çавăнпах вĕсем пуян тусĕсене илĕртеççĕ, укçаллисен çумне явăçаççĕ.

Наркăмăшпа айкашакансене тупса палăртас тĕлĕшпе ирттернĕ тĕрлĕ акци витĕмĕ пуррине те асăнса хăвармалла. Сăмахран, "Вилĕм ăçта сутнине пĕлтер" уйăхлăх кăтарту кӳрет. Паллах, кашни шăнкăрав тӳрре тухмасть. Анчах пуринпе те тĕрĕслев ирттереççĕ. Çамрăксене те, ваттисене те асăрхануллă пулма сĕнеççĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**



ÇЕМЬЕ

# Туслăхпа, юратупа, анчах – паспортсăр...

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

### «Кăвак çулăмсăр» та ăшă

Пўрт ăш-чикĕ тирпейлĕ те таса пулнипе çеç мар, ăшă пулнипе илемлĕ теççĕ. Паллах, вăл этемлĕхĕн черчен çурринчен те нумай килет.

Çапла, ача чухнехи кăмака ăшшине тахçанах манса кайнă эпир. Ялсене «кăвак çулăм» çитнĕ май ахалех вырăн йышăнса ларать тесе йăпăр-япăр пăсса тăкрĕç ăна. Ку килте сыхласа хăварнă акă. Тин çеç çăкăр пĕçерсе кăларнипе-ши е урамран кĕнипе-ши, кăмака ăшши урăхларах, тата та хĕрўрех пек туйăнчĕ мана. Вучахра типĕ вутă шатăртатса çуннă май эпир кухньăра шăкăл-шăкăл калаçса лартăмăр, кăвас тĕпĕпе пĕçернĕ тутлă та техĕмлĕ çăкăра астиврĕмĕр.

Козловсем «кăвак çулăм» кĕртес темен. Ĕлĕкхине – вутă хутса ăшăнса пурăннине – нимĕн те çитмест теççĕ. Вырăс кăмакинче çăкăр, кукăль-пўремеч, яшка-пăтă та техĕмлĕ пиçет. Урамран шăнса кĕрсен вĕри кăмака çумне тайăнса ăшăнма вара пушшех аван.

«Вăрман – чи пысăк пуянлăх, вăл вара хамăр çумрах. Кĕркунне вիçĕ хутчен каятăн та – вутă хатĕр те. Упăшка ир тăрать, эпĕ ыйхăран вăраниччен пўрте хутса ăшăтать, арăмĕ тăраниччен çывăрайтăр тесе шиклентет ахăр», – йăл кулать Валентина Николаевна.

Ĕçрен хăрамаççĕ Козловсем. Хĕл каçма вăрманта вутă-шанкă хатĕрленисĕр пуçне çырла-кăмпа, мăйăр, тĕрлĕ ўсентăран пуçтараççĕ. Выльăх-чĕрлĕх тытнăран тăранса пурăнмашкăн аш-пăшĕ те, çăвĕ те çителĕклĕ. Пахчаçимĕçне те кĕркунне нумай туса илнĕ. Улма-çырларан хатĕрленĕ варени-компот нўхреп туллиех.

### Турă Амăшĕн хўттипе

Паянхи кун кашни çын хăйне кирлĕ пек пурăнать, çавна май никама та ирĕксĕрлеме те, вăл е ку çынна сивлеме те çук.

СССР паспорчĕ пулнă-ха Козловсен. Кайран çĕннине илес темен. Вĕсем ăна кирлĕ документ вырăнне йышăнмаççĕ. Çавна май патшалăхран нимĕнле пулăшу та, ача пособийĕ те илмен. Паллах, амăшĕн капиталĕпе те усă курман. «Ал-ура ĕçлет, пурте таса-сывă, çакă мар-и-ха чăн-чăн телей, урăх тата мĕн кирлĕ?» – терĕ кил хуçи арăмĕ.

Чи кĕçĕннисемпе – йĕкĕрешсемпе – çие юлнине сиссен Валентина Николаевна Канашри больницăна кайнă. Хăйне тăрук йывăр туйма тытăннă 46 çулти хĕрарăм. Юн кайни пушшех те хăратнă пулас амăшне. Тухтăр патне лекес тесе гинеколог пўлĕмĕ умĕнче иртен пуçласа каçченех ларнă, темиçе черет те ирттерсе янă: ăна паспорт çуккишĕнех йышăнман. «Пĕр хĕрарăм бомжа илсе килчĕç. Ăна çуса тасатнă хыççăн тўрех йышăнчĕç, ман çине вара çаврăнса та пăхмарĕç», – чунне ыраттарсах каласа кăтартать Валентина Николаевна. Ĕнтĕ каç енне вăйĕ те пĕтсе çитнĕ, çапах та çуратма тĕв тунă хĕрарăм килне тухса утман. Юлашкинчен тĕп тухтăрпа канашласа пăхма шухăшланă.

«Эсĕ ватă, мĕн тума çурататăн, мĕн тума кирлĕ, сан татах та ачусем пур», – хирĕçленĕ лешĕ.

«Эпĕ пурпĕрех ачана вĕлерместĕп, хырăм пăрахса çылăха кĕместĕп», – касса татнă хĕрарăм. Больница сакки çинче куççуль витĕр кĕлĕ вуласа ларнă. Юлашкинчен ўкĕте кĕртнех шурă халатлисене, ăна больницăна вырттарма килĕшнĕ. «Хам çине тăман пулсан çак çылăхсăр пĕчĕк чунсем паян пулмастчĕç. Турă Амăшĕ пулăшнипе çуралчĕç», – терĕ пĕчĕккисене хăй çумне ачашшăн çупăрласа Валя аппа.

Ача çуратнă чухне хĕрарăмăн хăрах ури тупăкра тесе ахальтен каламаççĕ çав. Ыттисене хăех тата çăмăллăн çуратнă пулсан кĕçĕннисене касса кăларма тивнĕ. «Операци хыççăн аран тăна кĕнĕ эпĕ, часах вăранайман, вилĕм манпа юнашарах пулнă. Кайран калаçайми те пулса ларнăччĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн тин çын пултăм», – тăсăлать калаçу.

Хырăм пăрахнине сивлет Валентина Николаевна. Пытармарĕ, тăваттăмĕш ачине хăй те кун çути кăтартасшăн пулман, упăшки йăнăш çултан пăрнă: «Мĕн, хырăм пăрахса мана çылăха кĕртесшĕн-и?» Хĕрарăм пурăнас чунăн кун-çулне татнă çылăха арçын пĕрле пайланине чылайăшĕ пĕлмест те пулĕ...

### «Валя патĕнчех лайăх...»

«Кушак та ăшша юратать» тесе ахальтен каламан пуль çав ваттисем. Козловсем ăш пиллĕ, ырă та тараватпулнине таврара та пĕлеççĕ. Пĕччен ватăсене хăйсен хўттине илеççĕ вĕсем. Кунта хўтлĕх шыраса килекенсем паян та пур. «Кĕлтеçулĕнчи Валя патĕнчех лайăх», – текен ватă чылай ку тăрăхра. Халĕ Козловсем патĕнче Тăвай тăрăхĕнчен килнĕ пĕр кинеми пурăнатчĕ. Ватăскерĕн ыратакан урине хăйăрпа сипленĕ Валентина Козлова. Ăшă та лăпкă ăна кунта, никам та кўрентермест. Сĕтел çинче яланах çăкăр пур. Унсăр пуçне Валентина Николаевна 90 çулти хуняшшĕне пăхать.

«Çу çитсен килĕсене каялла каяççĕ вĕсем, пирĕн патра хĕл каçаççĕ çеç. Эпир кинемисене кайран те пăрахмастпăр, хăнана кайса çўретпĕр. Çынна ырă туни сăвап кăна пулать», – терĕ Валя аппа.

### Сак тулли сакăр ача

Саккăрăшĕнчен тăваттăшĕ çемьеленме ĕлкĕрнĕ. Георгий Павловичпа Валентина Николаевнăн мăнуксем те сахал мар. Çынна ырă тăвасси тĕпренчĕкĕсенче те пур. Хабаровскра пурăнакан Алексей хăй те икĕ ачаллă, унсăр пуçне арăмĕн аппăшĕн пепкине усрава илнĕ. Настя качча кайнă, кафере ĕçлет. Тĕпренчĕкне шăпах ашшĕпе амăшĕ патĕнче хăварнăччĕ. Пĕчĕкскер çывăрмалли пўлĕмре кĕлĕ лăпкăлăхĕпе тутлă ыйха путнăччĕ. Христина Канашра повара вĕренет. Таиç Усырмари вăтам шкулта 8-мĕш класра пĕлў пухать. Пĕр вырăнта ларса тăма пĕлмен Космапа Дамьяна амăшĕ çумĕнчех лайăх. Шартламара çуралнăскерсене хĕл сивви пачах та хăратмасть. Тумтирĕ пăрланса ларичченех çунашкапа ярăнма юратаççĕ вĕсем. Пўрте кĕрсенех мăйран уртăннă шăпăрлансем иртен çўрене: «Атьăр пирĕн пата чей ĕçме», – тесе чĕннинчен тĕлĕнмерĕм ĕнтĕ.

Георгий Павловичпа Валентина Николаевна ачисене тĕрĕс воспитани параççĕ, аслисем каланине итлеме, ватăна ватă пек, çамрăкпа çамрăк пек пулма вĕрентеççĕ. «Ырри ырăпах таврăнать. Çынна сивĕ сăмахпа сивĕтмелле мар, çăвартан пули-пулми сăмах кăлармалла мар. Хамăр лайăх пулсан çын та пирĕнпе лайăх. Эпир çĕр çинче хăнара кăна-çке», – калаçăва малалла тăсрĕ Валентина Николаевна.

Ырă малашлăха ĕненни çынна кирек хăçан та вăй парать. Козловсем пек ăш пиллĕ те тараватпурне те ырă кăна сунакансем пурри – чăн пуянлăх.

Ан тив, вĕсем хăйсен тĕнчинче пурăнаççĕ, анчах кўрше-арша, мĕнпур çынна яланах телейлĕ курассишĕн çунаççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

ПУЛАТЬ ВĔТ

# Урапа çинчен ўксе юлман...

Йăмăкĕ патĕнчен хăнаран таврăнакан Эльвира Петровна çывхарса килекен троллейбуса курсан уттине хăвăртлатрĕ. Сумки çăмăлах мар унăн. Унта кучченеç туллиех. Йăмăкĕ питĕ ырă кăмăллăскер. Мĕн хурса, мĕн парса ямаллине хăни алăка уçса пўрте кĕрсенех палăртса хурать пуль.

Ĕлкĕреймерĕ. Чупса çитнĕ çĕре иккĕмĕш номерлĕ троллейбус хўрине çеç курса юлчĕ. Вăл сумкине чăрăнури сак çине лартса тўрленсе тăчĕ. Çав вăхăтра çăмăл ăшă кĕрĕкĕн пиçиххийĕ салтăнса кайрĕ те çĕре лаплатрĕ.

– Çамрăкланасшăн иккен, модăран юласшăн мар, – илтĕнчĕ хыçра. Пуçне пăрчĕ те çўллех мар, кивĕ куртка, спорт шăлаварĕ тăхăннă хĕрарăма курчĕ.

– Ма юлас модăран? Ма çамрăкланас мар? – куларах тавăрчĕ пенси çулне çитнĕ Эльвира Петровна.

– Укçа пулсан мода хыççăн хăвалама пулать, – вĕчĕрхенерех калаçрĕ хĕрарăм. – Укçине ăçтан илмелле? Тумланса ăçта каймалла пенси çулне çитсен?

– Каймалли тупăнать вăл. Хулара тем чухлех интереслĕ вырăнсем.

Çак сăмахсем тулли икĕ хутаçне çатăрласа тытнă хĕрарăма уртарсах ячĕç.

– Çапла пуль! Эсĕ ав хаклă йышши кĕрĕк, хаклă йышши атă тăхăннă. Питĕ культурăллă курăнатăн.

– Пур кăштах, – йăл кулчĕ те Эльвира Петровна çитсе чарăннă троллейбус патне чупрĕ.

– Подумаешь, культурная! – илтĕнчĕ хыçалта.

Шалта пушă вырăн шыраса пăхкаларĕ хĕрарăм. Çав вăхăтра аллă çулсенчи пĕр арçын вырăнтан çĕкленчĕ те:

– Ларăр тархасшăн, – терĕ.

– Вăт, вăт, мана вырăн памарăр! Эпĕ мĕн, унран каяим?! Эпир унпа пĕр çулхисемех! – кăшкăрашкаларĕ хĕрлĕ куртка, спорт хĕрлĕ шăлаварĕ тăхăннă хĕрарăм. Хăй çулне кура мар элес-мелес сăрланнă.

Арçын куçлăхне хывса ăна куçпа пăраларĕ те:

– Санăн чĕлхў вăрăм, – терĕ йăл кулса.

Вăл Эльвира Петровнăн тахçанхи пĕлĕшĕ пек пуçпа сулса сывпулашрĕ те малалла иртрĕ.

– Мĕн, çак куштан сан пĕлĕшў-им? – кĕвĕçўллĕ сасăпа ыйтрĕ хĕрарăм. – Илемлĕ арçын. Сана куç хывнă пулас вăл.

Нимĕн те чĕнмерĕ Эльвира Петровна. Хĕрарăма, калăн, темĕнле вăй хускатса янă, калаçать те калаçать.

– Вăт кĕрĕк тăхăннă эсĕ. Илемлĕ, хаклăскер тесшĕн пуль-ха. Кĕрĕк-и ĕнтĕ çакă: чĕркуççине те хуплаймасть.

Чăтаймарĕ Эльвира Петровна:

– Кашниййĕн хайĕн вырăнĕ, хăйĕн вăхăчĕ, – тесе хучĕ сăпайлăн.

– Çапла пуль, çапла пуль. Сирĕн пеккисен, çын шучĕпе пурăнакансен, темли те пур пуль. Кунта акă ултă пинпе тем илмелле. Те хваттершĕн тўлемелле, те çимелле-ĕçмелле.

Çăварне шыв сыпрĕ Эльвира Петровна. Такам юри ярать пулĕ çакăн пек çынсене унăн çулĕ çине. Вăл вырăн паракан ырă çынна куçпа шырарĕ. Лешĕ курăнмарĕ. Троллейбусран тухнă пулинех.

Хăйпе никам та калаçманнине кура хĕрарăм ларакан пĕр çамрăк арçын патне таплаттарса пычĕ те:

– Тăр-ха. Мĕн, санăн кăна саркаланса лармалла-и? Эпĕ те укça тўленĕ, – терĕ.

Лешĕ, çакна кĕтменскер:

– Эпĕ-эпĕ-эпĕ, – терĕ те тытăнчăклăн, вырăнтан салтак пек сиксе тăчĕ.

# Хамран вăйлăраххи пур-ши?

Упăшка теприн патне пăрахса кайни шăп ултă çул çитрĕ. Çав кунранпа эпĕ пĕчченех пурăнатăп. Ачана ашшĕсĕр ÿстерме çăмăл мар. Куç хывакансем пур мана та, анчах та вĕсем е çемьеллĕ, е сипленсе вăхăтлăха ĕçме пăрахнă. Мĕн пытармалли, ун пеккисенчен пархатарĕ сахал, ик-виç уйăхран каяллах ĕçке ярăнаççĕ. Чылайăшĕн арăмĕнчен вăрттăн теприн патĕнче канас килет. Мана вара вăхăтлăх арçын кирлĕ мар. Никам еркĕнĕ те пулас килмест.

Ик-виç çул каялла пĕр арçынпа паллашнăччĕ. Сăмах-юмах ваклама юратаканскер манпа питĕ хăвăрт пĕр чĕлхе тупрĕ. Пĕррехинче кивçен укçа ыйтрĕ те процентпа тÿлеме шантарчĕ. Виçĕ пин кăларса тыттартăм. Чăн та, тепĕр уйăхран 500 тенкĕ хушса тÿлерĕ. Хам ыйтсан хăнана чей ĕçмелли илсе кĕркелетчĕ, каламасан пушă алăпах вĕçтерсе çитет. Пĕррехинче каллех виçĕ пин тенкĕ ыйтрĕ. Килĕштетчĕ вăл мана, унран хаклă çын та çукчĕ юлашки вăхăтра. Пур-çук укçана самантрах кăларса патăм. Эрне кĕтрĕм – килмерĕ, уйăхран та çук. Çухалчĕ ман çын. Вăл ăçта пурăннине те пĕлместĕп. Айванккана шăнман пăр çине лартса хăварчĕ. Пачах шанчăкран тухрĕç арçынсем. Чей ĕçме илсе кĕнĕ печени-канфетшăн, малтанхи процентшăн темиçе хут ытларах хамăн кăларса яма тиврĕ. Эх, намăс та мар-ши? Пĕччен пурăнакан чухăн хĕрарăмран çапла кулмаллаччĕ-ши? Хăй каланă тăрăх, кредитсен пысăкчĕ унăн, ĕçĕнче вара ытла та сахал тÿлетчĕç, çавăн пиркиех шеллеттĕм те ăна. Арçынсене нихăçан та хĕрхенмелле маррине тин ăнланса илтĕм. Мана, айванккана, май пур тăк тата ытларах çарататчĕ-ха. Чухăн иккене пĕлчĕ те – пăрăнса утрĕ. Хĕрарăм шутĕнчен тăранса пурăнас тесе темĕн тума та, кирек мĕн шухăшласа тупма та хатĕр пирĕн арçынсем.

Иртнĕ çул хамăр ялти пĕр арçын çур михĕ çĕрулмипе çитнĕччĕ ман пата. Чей ĕçмешкĕн сухари йăтса кĕнĕччĕ хайхи. Çĕр каçма хăварман та кÿренчĕ, çĕрулмине те, сухарине те пĕрлех сĕтĕрсе тухса кайрĕ.

Аякка каймалла та мар, хамăр ĕçтешсем те çавнашкалах. Пĕр канфет та ахаль çитерес çук. Юрĕ, вĕсем пирки тепрехинче сăмах ваклăпăр.

Аппан упăшки те тĕлĕнтерет. Пилĕк çул ĕнтĕ йĕркеллĕ ниçта та ĕçлемест. Хушăран унта-кунта укçа тукаласа килсен уйрăм тытать. Иртнĕ эрнере хĕвелçаврăнăш çăвĕ туяннă та – аппаран пытарса хунă. Машинăпа ăçта та пулин каймалла пулсан бензиншăн хăй мар, пĕрмаях арăмĕ тÿлет. Вăйпитти те сывă арçыннăн епле укçа пулмалла мар, кĕсьере чăштăртатса тăмалла. Ÿркенмесен таçта та ĕç тупма пулать халь. Хĕрарăм хулпуççи çине хăпарсах ларчĕç паянхи арçынсем. Тăрантарса усрани кăна çителĕксĕр, çепĕçлĕхпе ачашлăх, хăтлăх кирлĕ тата вĕсене. Пĕрмай укçа çук тесе нăйăлтатакан мĕскĕнсене чăтма пултараймастăп. Мĕншĕн хĕрарăмăн яланах пур? Çĕр çывăрмасăр ĕçлет вăл, апат-çимĕç туянма та, ачисене тумлантарма та укçа тупатех.

Ялти хусах арçынсем, тархасшăн, манпа тĕл пулас тесе ан та чăрманăр. Киле пурпĕр никама та кĕртместĕп, хам та яла кайса пурăнмастăп. Ĕнсе çине хăпарса ларакансем кирлĕ мар мана. Кайран антараймăн та. Хамран вăйлăраххине, пуянраххине шыратăп эпĕ. Ун пеккисем пур-ши?

**АЛЕНА.**

Шупашкар хули.

# Тупăлча

Николай ВАСМАТ

/Малалли. Пуçламăшĕ 2-3-мĕш номерсенче/.

Çак шухăшсем мана мĕн пĕчĕкрен нушалантарма пуçларĕç, халĕ те канăç памаççĕ. Эпĕ çутă тĕнчене килнĕ «Тупăлча ача». Кама кирлĕ тĕнчере мăшкăл курса пурăнатăп пулсан?! Акă анатăп та çырмана хăва çине хăпарса мăя вĕрен тăхăнса çакăнса вилетĕп! Ун чухне мăшкăл курса çут тĕнчере пурăнмăп».

«Хурланса ан йĕр, пĕчĕкçĕ чĕппĕм. Эсĕ халĕ ытла пĕчĕкха, кăшт ÿссе çитĕнсенех инçетри хулана, аппу пурăнакан вырăна, тухса кайăпăр. Эсĕ çакна яланлăха асра тытсам: аван-и, начар-и – эсĕ кирлĕ мана. Саншăн çеç пурăнатăп çакă çутă тĕнчере», – терĕ каллех анне. Унăн çепĕç те лăпкă сăмахĕсене илтсен тин лăпланаттăм.

* * *

Ача ĕмĕчĕ хăть хăçан та çитет тенине пĕрре мар илтнĕ. Çавна кура мĕн пĕчĕкрен ĕмĕтленме пăрахмарăм пулмалла. Ăçта пырса тухсан та, ăçта çÿресен те манăн пуçра ялан мĕнле те пулин ĕмĕт çавăрнатчĕ. Е эпĕ инçете-инçете тухса кайса хам тĕллĕн ĕçлесе пурăнатăп, е мĕнле-тĕр техникăпа усă курса таçта, хам пĕлмен çĕрте сывлăша вĕçсе хăпаратăп та икĕ алла сарса ярса уçă сывлăшра вĕçсе çÿретĕп. Мана никам та чармасть, манпа никам та хуçаланмасть...

Çитет иккен ĕмĕт. Пĕррехинче мана анне ыйхăран вăратрĕ те: «Тумлан хăвăртрах, ачам. Пирĕн инçете каймалла. Халех васкаса тăхăнмасан эпир пуйăса ĕлкĕрейместпĕр». Килтен тухса кайнине эпĕ питĕ лайăх астăватăп. Мĕнле-тĕр пысăк çуртсене курсан тĕлĕнсех кайнăччĕ. Ăçта пăхан – унта машина чупать. Çавăн чухлĕ пысăк пÿртсем тата тĕрлĕ машина эпĕ нихăçан та курманнипе куç-пуçа чарса пăрахсах енчен енне сăнаса пăхатăп. Вăт тĕлĕнтермĕш япала, ăçтан тухса пĕтнĕ çакăн чухлĕ машина? Вĕсем пурте чарăнмасăр чупаççĕ. «Эх, çавсенчен пĕрин çине ларса каясчĕ те каялла çаврăнса пăхмасăр малалла вĕçтересчĕ кăна», – шухăшласа утатăп анне çумĕнче.

Унччен те пулмарĕ, пысăк кустăрмаллă тимĕр купи ÿ-ÿ-ÿ! туса хытă кăшкăртса ячĕ, эпĕ хăранипе анне аллинчен ярса тытрăм. «Ан хăра, ачам. Çакă пире инçете-инçете лартса каякан пуйăс. Акă шала кĕрсе ларăпăр та вĕçтерĕпĕр инçетри Çĕпĕре, пире никам тупма пултарайман вырăна. Çавăн чухне эсĕ вырăсла та калаçма вĕренсе çитĕн. Нумай чĕлхе пĕлни çынна нихăçан та пăсмасть», – тенĕччĕ çавăн чухне анне.

Тăнкăр-тăнкăр! чупать «пуйăс». Унăн сассине итлесе пынă май эпĕ: «Ку мĕн-ма çавăн пек тăнкăртатса пыратьши?» – тесе аннерен темиçе хут та ыйтса пĕлтĕм. Ку кăна та мар-ха: «Ăçта каятпăр, анне, тăван яла пăрахса?» – ыйтатăп унăн кусĕнчен пăхса. «Мăшкăл çук вырăна, инçетри хулана», – хуравлать мана анне ик кусĕнчен те шăпăртатса юхакан куççульне шăлса.

Çав вăхăта, ачалăха аса илсен халĕ те пуйăс кустăрмисен сасси манăн хăлхара тăнкăртатса тăрать. Ниçта та çухалма пĕлмест çав самант. Ах, мĕскĕн ачалăх! Мĕншĕнши вăл ытла та тутлă, çав вăхăтрах йÿçĕ те? Шухăшласа пăхсан тĕлĕнсе каймалли – мĕн курнисем ниçта çухалмаççĕ куç умĕнчен. Калăн, ĕнер çеç пулса иртнĕ. Каялла çаврăнса пăхсан çур ĕмĕр иртсе кайнине сисмесĕрех юлнине пĕлсен, шухăшлатăн вара: мĕн-ма-ха ытла хăвăрт иртсе кайрĕ çамрăк вăхăт? Тин кăна ачаччĕ, урамра лашалла выляса чупаттăмăр, юлташсемпе алхасаттăмăр, пулă тытаттăмăр... Çавăнпа калаççĕ иккен «эпир кунта хăнара кăна» тесе...

Виç-тăват кун пуйăсра тăнкăртатса пынине лайăх астуса юлтăм эпĕ. Пĕр енчен мана килĕшрĕ пек, тепĕр енчен вара йăлăхтарса çитернипе сиксе юлас килнине туйса илтĕм те, каллех аннене аптăратма пуçларăм.

Инçе кайнине ăнлантăм эпĕ. Пĕр-пĕр вырăнта пирĕн пуйăс чарăнса тăрать те, нумай çын анса юлать. Эпир вара шав малалла танкăртататпăр. Ывăнса çитрĕм. Никампа та выляма, алхасма пулмасть. Пурте эпĕ ăнланман сăмахсемпе калаçаççĕ, эпĕ вĕсем мĕн калаçнине ăнланмастăп. Йăлăхтарсах çитерчĕ çакă.

Акă пуйăс хытă кăшкăртса илчĕ те хăвăртлăхне чакарса пĕлмен вырăна чарăнчĕ. Чÿречерен пăхатăп та тĕлĕннипе куç-пуçа чарсах пăрахатăп: мĕн чухлĕ халăх хĕвĕшет пĕр вырăнта! Ăçтан тухса пĕтнĕ çав çынсем? Пурте таçта чупаççĕ, хĕвĕшеççĕ, васкаççĕ, пĕрне пĕри тĕксе хăвараççĕ. Мĕн ку? «Вĕсем патне тухас пулсан аннене çухатса хăварма пулать вĕт, – шухăшлатăп хам.

Ăçта тата кам патне илсе çитерчĕ мана анне, халĕ, паллах, калама пултаратăп. Анчах ун чухне, пĕчĕк ача пулнă вăхăтра, пĕлмен. Пысăк хуларан пăрăнса каллех ял пек урамсемпе утнă хыççăн пĕр пÿрт умне чарăнса тăчĕ манăн анне. Çынсенчен темĕн ыйта-ыйта пĕлет хăй. Нумай вăхăт иртсен тин пирĕн пата палламан хĕрарăм пырса тăчĕ. Тÿрех аннене ыталама, чуптума пуçларĕ. Мана та ыталаса илсех чуптурĕ. Таçта инçетри вырăнта пулсан та çак хĕрарăм чăвашла калаçнине илтсен тĕлĕнсех кайрăм. «Эсĕ кам вара?» – ыйтрăм унран чăвашла. Вăл ман çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те: «Эпĕ санăн аппу пулатăп. Ан хăра эсĕ манран», – терĕ тепĕр хут ыталаса илсе. Хама лайăххах туйнипе савăнса урам тăрăх чупкалама пуçларăм кăна, вĕсем мана иккĕшĕ те алăран çавăтса пĕр çурта илсе кĕчĕç. Унта йĕри-тавра чаплă япаласем. Радио калаçнине илтсен эпĕ çавна пĕр вырăна тăрсах итлеме пуçласан: «Сирĕн ялта радио та çук-и?» – илтрĕм аппан сассине. «Ăçтан пулмалла? Хальлĕхе çав япала ялĕпе те темиçе кăна. Пуянсем çеç кĕртме пултараççĕ çавна. Ăна мар, тăраниччен апат çимелĕх те ĕçлесе илме çук колхозра. Йытă пек кунĕпе уй-хирте чакалансан та хут çине паллă туса хунипе çырлахмалла. Ачасене хăть мĕн тупса çитер, вĕсемшĕн пурпĕрех. Ирех ĕçе хăвалама пуçлаççĕ те каçчен ĕçлемелле. Килте выльăх нумайрах тытма та ирĕк памаççĕ хăть. Вĕсем пулсан налук нумай тÿлемелле. Çавăнпа ял халăхĕ йывăрлăха кĕрсе ÿкрĕ. Тухса кайма та ирĕк памаççĕ. Сан пата килме те эрне ытла хатĕрлентĕм. Каçхине, никам курман чухне, пур-çук япалана пуçтартăм та çуранах кÿршĕ яла утрăм. Унтан автобуса ларса çывăхри хулана Чĕмпĕре çитсе ÿкрĕм. Пуйăса ларса акă паян сан пата çитрĕмĕр. Кунта ĕç тупма пулать тенине эсĕ мана тахçанах çырса пĕлтернĕччĕ. Тен, çак кунсенчех ĕçе тухма май пур?» – ыйтрĕ анне аппаран. «Паянах хамăн пуçлăх патне кайса калаçатăп. Вăл мана çын кирлине малтанах каланăччĕ. Ытла ан хуйхăр, кунта ĕçрен нумайăн нимĕн те çук. Ÿркенмелле мар кăна. Укçине те вăхăтлă тÿлеççĕ. Выçă вилместĕн», – пĕлтерчĕ вăл.

Çак сăмахсене каласан вырăс çынни калаçма чарăнса тăчĕ те каллех пирĕн çине пăхса илчĕ. Хăй темшĕн салхуллă. Çакна курсанах Виктор кĕленчене алла илчĕ. Ахальтен каламаççĕ-мĕн пушă черккепе сăмах малалла тăсăлмасть тесе. Хальхинче те çапла пулса тухрĕ.

Кăшт вăхăт иртсенех пирĕн çын каллех хăйĕн сăмахне малалла калама тытăнчĕ. «Çĕнĕрен пуçланчĕ маншăн чĕр нуша. Каçхине аннене юнашар вырăн çине сывăрма выртатăп. Ирхине вăранса каятăп та – анне çук. Вăл кашни кун ирех ĕçе тухса каять иккен, каç пуласпа тин таврăнать. Хăш-пĕр самантра ман пата кÿршĕре пурăнакан ватă карчăк кĕрет те «так-так!» тесен тытăнать манпа темле ăнланман сăмахсемпе пакăлтатма. Темĕн калать вăл, эпĕ нимĕн те, пĕр сăмахне те ăнланмастăп. Сĕтел çине яшка лартса хăварсан ним чĕнмесĕр тухса каять. Пÿртре каллех пĕччен тăрса юлатăп. Нимĕн тăвайман енне вырăн çинче сиккелетĕп. Пÿртри япаласемпе те выляса пăхатăп, анчах çавсем мана пĕртте кантармаççĕ. Манăн урама тухса чупас, выляс килет. Анчах пÿрт алăкне тултан питĕрсе каять палламан карчăк. Тула тухма пулманнипе хытă макăрса та пăхатăп. Кам пулăштăр мана, пĕччен ачана? Çакăн хыççăн ялта витене пытанса йĕрсе ларнă пек пĕр кĕтесе вырнаçса ларатăп та: «Ах, аннеçĕм, анне, ма хăвартăн пăрахса, эпĕ пĕчĕк ача вĕтха, пĕччен юлма питĕ хăратăп», – тесе куççуль юхтарса йĕме пуçлатăп.

/Вĕçĕ пулать/.

АСТĂВĂМ

# Сакки, чăн та, сарлака...



Кăрлачăн 2-мĕш кунĕнче Чĕмпĕрте пурăнакан юлташăм шăнкăравларĕ. Çĕнĕ çул саламĕпе пĕрлех синкерлĕ хыпар пĕлтерчĕ вăл: "Ĕнер Слава Перепелкин вилсе кайнă". Чăваш патшалăх университетĕнче пĕр курсра вĕреннĕ юлташăм пурнăçран уйрăлнă тени чуна пушатса хăварчĕ, сисмесĕрех пуçра асаилÿ саманчĕсем мĕлтлетме тытăнчĕç: пĕр кил пек туйăннă 6-мĕш общежити, пĕрле çÿренисем, В.Митта калашле "шухă та шухăшсăр" çамрăклăх... Çав асаилÿсем ырă туйăмсем хускатса чуна кăштах лăплантарчĕç пулсан та, хурлăхлă пулчĕç. Ĕнер анчах пулса иртнĕн туйăнчĕç çав самантсем.

Ĕмĕтлĕ, тĕллевлĕ, тăрăшуллă та ĕçлĕ çыннччĕ Слава. Журналист пулас ĕмĕтпе пурăнчĕ вăл, çав тĕллевпех вĕренетчĕ те. Питĕ шел çаксене иртнĕ вăхăтра çырма.

1987 çулта эпир унпа Патăрьел районĕн "Авангард" хаçат редакцийĕнче практикăра пултăмăр. Çавăн чухнех курса ĕненнĕччĕ эпĕ Слава журналистăн çăмăл мар ĕçне чунпа юратса та ăспа ăнкарса суйласа илнине, çырас ăсталăха ÿстерессишĕн вăхăтне шеллемесĕр тăрăшнине. Ĕçтеше халаласа сăвă та çуралнăччĕ.

Ан пăрăн, журналист,
çулран,
Çулу сан такăр мар.
Ут пурнăç таппипе пĕр тан,
Сирпĕнтерсе кăвар.

Утас çулу инçе-инçе,
Ан тутăхтăр перу.
Район хаçат редакцинче
Сунаççĕ ăнăçу.

Чĕресенче хĕмленчĕ вут.
Тавах редактора.
Паян эпир пĕрремĕш хут
Командировкăра.

Перестройка саманинче республика тулашĕнче чăваш класĕсем чылай уçăлчĕç. Наци аталанăвĕн чĕрĕлĕх тапхăрĕ пек пулчĕ çав вăхăт. Шкулсенче чăваш чĕлхи учителĕсем çитменнипе пире, 1990 çулта Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультечĕн чăваш уйрăмĕнчен вĕренсе тухнисене, çав шутра пулас журналистсене те, шкула кайма хистерĕç. "Манăн хамăн специальноçпа хаçатрах ĕçлес килет", – хирĕçленĕччĕ ун чухне С.Перепелкин деканатра.

Шăпамăр кĕнекине хамăр кăмăлпа çеç мар, самана хушăвĕпе те çыратпăр çав. Пурнăçра çитмĕл çичĕ пăрăнăç тенĕн, Слава тусăм та чылай вăхăт юратнă ĕçĕнче вăй хураймарĕ. Тăван ялĕнче шкулта вăй хучĕç вĕсем мăшăрĕпе Елена Сафроновнăпа. Хĕр пăхса çитĕнтерчĕç. Кĕске пурнăçĕн юлашки çулĕсене çеç Святослав Алексеевич хăйĕн юратнă ĕçĕпе çыхăнтарчĕ, виçĕ çул ытларах "Авангард" хаçат редакторĕнче вăй хучĕ. Хăйне шеллемесĕр тăрăшрĕ вăл явапллă ĕçре. Яваплăх шухăшсемсĕр пулмасть. Шухăш вара çын ĕмĕрне кĕскетет теççĕ. Кăрлачăн 17-мĕшĕнче 49 çул тултармаллаччĕ Слава...

Кăрлачăн 3-мĕшĕнче пытартăмăр юлташăмăра. Инçетрисене те, çывăххисене те пуçтарчĕ Анат Туçа масарĕ. Çук, масар çыннăн чунне лăплантараймасть, кунти шăплăх салхулăхпа хурлăха сирĕмест, куççуле те чараймасть ывăç тăпри. Ашшĕпе, тăванĕсемпе юнашар ĕмĕрлĕх вырăн тупрĕ юлташăмăр. "Ашшĕ-амăшĕпе пĕр масарта выртакан телейлĕ", – тенĕччĕ В.Митта...

Кăмăлĕ ырăччĕ Славăн. Пĕрле вĕреннĕ вăхăтра вăл кампа та пулин вăрçăннине, кама-тăр кÿрентернине ас тумастăп. Ютчĕ уншăн унашкал киревсĕрлĕх. Кайран та вăл хăй ирĕкĕпе никама та усал сунман пуль. Пулăшу ыйтакан енне вара нихçан та кутăн çаврăнса тăман, алă тăсса панă.

Хавасла чунлă, кулянма та кÿренме пĕлмен, малашлăха шанăçпа пăхакан яштака та çÿллĕ каччă сăнарĕ тухса тăрать куç умне Слава Перепелкин тесен. Çав сăнар чуна ăшăтать, яшлăх çулĕсене таврăса ытарайми асаилÿ çуратать, пурнăçа юратса малалла утма хистет. Эпĕ çеç мар, ЧПУн историпе филологи факультетĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташсем те, ыттисем те çавнах калама пултараççĕ. Ун пирки пĕрре те иккĕленместĕп.

Пуçа шăнăçаймасть Слава Перепелкин çĕр çинче текех çук тени. Тăпру çăмăл пултăр, тусăмăр. Санăн çутă сăнару пирĕн асрах пулĕ.

**Пĕрле вĕреннĕ юлташĕсен ячĕпе – Петр СЕМЕНОВ.**



# 70 çула тăсăлнă шăплăх...

**Хĕрлĕ Çар Освенцим /Аушвиц/ концлагерьне 1945 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче ирĕке кăларнă. Вилĕм лагерĕнче фашистсем 1,5 миллиона яхăн çынна тĕп тунă. Ăнсăртран кăна чĕрĕ юлнисем хăрушă çак кунсене халĕ те чĕтре-чĕтре кăна аса илеççĕ.**

1945 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче 16 çулти Женя Ковалев Освенцимăн 32-мĕш баракĕнче иккĕмĕш хутри çÿлĕк çинче хырăмĕ вырăнта касăлнипе вăранса кайнă. Ирхи апат – пĕр курка чей. Ăна кĕтсе те чун тухать. Йĕри-тавра тĕлĕнмелле шăплăх хуçаланать... Овчаркăсем вĕрни те, хуралçăсем кăшкăрни те илтĕнмест. Унтан куçĕ шурă чатăрпа хупланать... “Ахăртнех, эпĕ вырăнта тăн çухатнă... Куçа тепĕр хут уçнă чухне баракра никам та юлманччĕ ĕнтĕ. Асăрханса камерăран пуçа кăларса пăхрăм. Картишĕнче çынсем унталла та кунталла кумаççĕ. Йĕркене пăсни пулать-çке ку. Йăрăм-йăрăм тумтир хушшинче Хĕрлĕ Çар форми тăхăннă, хĕç-пăшалланнă çынсем курăннă пек туйăнса кайрĕ”, – аса илет паян Освенцима 49568-мĕш номерпе çакланнă Евгений Филиппович Ковалев.

87-ри арçын хăйсене ирĕке кăларнă куна та асапа кăна аса илет. Вăл Мускаври 1094-мĕш шкулта вĕренекенсемпе тĕлпулăва тăтăшах çÿрет – унта концлагерсене çакланнă ачасен музейне уçнă-мĕн. Анчах та Евгений Филиппович нихăçан та нимĕн те каласа кăтартман... Çакăн çинчен калаçма вăйĕ пулман унăн. Пĕррехинче кĕçĕн класра вĕренекен хĕр пĕрчи тĕлпулăва шурă çăкăр илсе пынă. Вилĕм аллинчен çăлăннисем ăна пайласа, куççульпе çуса çинĕ. Çапла татăлса кайнă асаилÿ пĕви... “Çакăн хыççăн кăна Евгений Филиппович пĕрремĕш хут каласа кăтартма пуçларĕ”, – тет шкул музейĕн директорĕ Евгений Зимин.

## 14-ри партизан

Женя Ковалев виççĕре амăшĕсĕр тăрса юлнă. Аслисем, вĕсем тăваттăн пулнă, пăхнă шăллĕне. 1941 çулта, Смоленск тăрăхне нимĕçсем килсен, арçын ача партизансен ретне тăнă. Вăл унта çыхăнуçă пулнă.

“Смоленск-Витебск çулĕ çинчи кĕперсене мĕнле сыхланине тĕрĕслемеллеччĕ пирĕн. Палăртнă вырăна çитме 50 метр юлнăччĕ, пире хирĕç машина килнине куртăмăр. Чарăнса эпир кунта мĕн туса çÿренине ыйтсан ĕне çухалнине, ăна шыранине каларăмăр. Ĕненмерĕç. Тĕрмене хупрĕç. Питĕ вăйлă хĕнерĕç, отряд ăçта чарăннине ыйтрĕç. Мĕнле вĕлермерĕç пире – пĕлместĕп”, – шăлать куççульне арçын.

Тĕрмерен Женя Ковалева тÿрех Освенцима ăсатнă. Çамрăк партизансене лагере çĕрле илсе çитернĕ.

“Хамăра ăçта илсе кайнине эпир тĕшмĕртме те пултарайман. Йĕри-тавра çап-çутă, автоматчиксем хупăрланă, йытăсем сиксе вĕреççĕ. Çÿçе шакла касса ячĕç те карантина хупрĕç. Пире 700 çынна илсе пынăччĕ. Эрнерен 150-ăн тăрса юлтăмăр. Вĕсем çакна “селекци” тетчĕç. Каярахпа 32 блок тăрăх салатрĕç”.

Освенцимра 1943-1945 çулсенче пулнă вăл. Чукун çултан инçех мар вырнаçнă пахчаçимĕç управĕнче ĕçленĕ. “Ирхине 6-ра тăрататчĕç. 12 сехет ĕçлеттĕмĕр. Каçхи 11-те çывăрма выртма юратчĕ. Ирхине – чей, кăнтăрла – мăшкăлтăк евĕр пăтранчăк шыв, каçхине чей тата тăватă çынна пĕр çăкăр тивĕçетчĕ. Кашни ир пирĕн баракра 5-7 çын вăранмастчĕ. Ку та чи хăрушши марччĕ-ха. Нимрен ытла “селекци” хăрататчĕ. Уйăхра иккĕ ирттеретчĕç ăна. Урама илсе тухса хывăнтаратчĕç те çавăра-çавăра пăхатчĕç. Мĕн те пулин килĕшмесен тÿрех крематорие ăсататчĕç. Çын кĕлеткисене уçă вырăнтах шăтăкра çунтаратчĕç”. Пушă вăхăтра та çынсем пĕр-пĕринпе питех хутшăнман – çакна валли вăй юлман. Калаçу та апат-çимĕçпе кăна çыхăннă. Тĕлĕк курнине те ас тумасть Ковалев. Ытла хытă ывăннăран пĕртенпĕр тĕлĕк асра юлнине палăртать вăл – çăкăр аса килнĕ-мĕн тата вĕри çĕрулми.

Ăна пĕррехинче кăна хĕненĕ – йĕркене пăхăнманшăн. Нимĕçсем иртсе пынă чух йăрăм-йăрăм тюбетейкăна хывса пуçа тайса тăмалла пулнă, арçын ача инçех мар иртсе пыракан хуралçăна асăрхаман. Каçхине ăна урама илсе тухса çĕр çине выртма хушнă. Эсесовецсем патакпа хĕненĕ. Унтан сивĕ шыв тултарнă бассейна сикме хушнă – такăнса ÿкиччен чупмалла...

“Лагере çакланнисене уйăхра пĕрре супăнь татки паратчĕç. Эпир çăвăннă хушăра яппаласене пухса илсе кăмакара хĕртетчĕç. Хамăра шăршлă сарă шĕвек сĕретчĕç – пытăран. Ÿт хăмпăланса çуркаланатчĕ. Çĕрле барака пичке кĕртсе лартатчĕç – турат вĕçне шыв килсен пушатма. Нимĕнле хут тавраш те паман. Кирлĕ те пулман ку – эрнере пĕрре пушанатчĕ хырăмлăх. Каяш мулкачăн пек çаврашкасемпе тип-типĕ тухатчĕ...” Освенцимра икĕ çул пулнă вăхăтра Евгений Ковалев пĕрре те чирлемен. 1945 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕ вара уншăн – иккĕмĕш çуралнă кун. Лагерьте ун чухне кунĕпех “Ура!” янăрани те – асĕнчех...

## Çăлавçă салтак

Владимир Черников Евгений Ковалевран 3 çул аслărах. Лагере çăлавçă пек пырса кĕнĕ вăхăтра каччă 19-та пулнă. Аманнăскер, тин кăна госпитальтен тухнă вăл.

“Чи малтан пирĕн пата роба тăхăннă, куçне сыхнă арçын пычĕ. Питĕ шăршлă темĕнле япала туртатчĕ вăл. Улăм иккен. Эпĕ асличчĕ те салтаксене сигаретсене кăларма ыйтрăм. Темиçе пачка харăс курсан вăл чĕркуçленсе ларчĕ. Эпир ăна ура çине тăратрăмăр. Каярахпа пире лагерь территорине пăхса çаврăнма сĕнчĕ”, – аса илет Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Владимир Черников. Утнă май арçын салтаксене куçне уçса кăтартнă – ятарласа чиксе шăтарнăскер çĕрме пуçланă... “Крематори енне утнă май темиçе хĕрарăма тĕл пултăмăр. Пире асăрхатарнăччĕ – никама та перĕнмелле мар, чуптумалла мар. Анчах та вĕсем пире мăйран çакăнчĕç, шăппăн, нимĕн чĕнмесĕр макăрчĕç. Хамăрăн та куççуль юхать. Мĕнле тĕксе ярăн-ха вĕсене?!” Ура çине тăрайманнисем çамрăк салтак чунĕнче нихçан пирчеми йĕр хăварнă. Тухтăрсем çитменнипе вĕсене мĕнле пулăшмаллине те пĕлмен.

Владимир Черников лагерьте 3 сехет кăна пулнă, çул малалла – Европăна – чĕннĕ. Каярахпа тата икĕ концлагере хăтарма тивнĕ унăн, анчах Освенцим чунне кисретнĕ.

Нимĕçсем лагерьтен кăрлачăн 26-мĕшĕнче тухса кайнă. Васкавлăн. Çапах та темиçе крематорие тата документсен пысăк пайне сирпĕтме ĕлкĕрнĕ. Çирĕпреххисене маларахах нацистла Германие ăсатнă. Ирĕке кăларнă кун Освенцимра 7 пин ытларах çын пулнă. Йĕри-тавра минăсем лартса хăварнă. “Вилĕм фабрикине” çавăнпах никам та хÿтĕлемен. Хĕрлĕ Çар салтакĕсем 300 çынна яхăн минăсене пула сирпĕннĕ теççĕ. Сивве тата выçса пула кунта 1 пине яхăн ача вилнине палăртаççĕ. 1,5 пин тин çуралнă пепкене тÿрех пытарнă. Кушак çури пек...

## Освенцим акушерки

Польша хĕрарăмĕ Станислава Лещинска 1965 çулта кăна калаçма хăюлăх çитернĕ. Вăл каласа кăтартнă тăрăх, Освенцима илсе пыракан хĕрарăмсен хушшинче пысăк хырăмлисем нумай пулнă. Акушерка виçĕ баракри хĕрарăмсене пăхса тăнă – лешсем хăмаран çапса тунăскерсенче пурăннă. Йĕри-тавра йĕкехÿресем шăтарса пĕтернĕ. Шалта виçĕ хутлă койкăсем пулнă. Ача кĕтекен хĕрарăмсен баракĕсем ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман – çуртсене çулталăкра темиçе хутчен кăна хутса ăшăтнă. Шыв патне акушерка хăй çÿренĕ.

“Çакăн пек условисенче çуратакан хĕрарăмсене мĕн кĕтни каламасăрах паллă. Акушеркăна та çăмăл пулман – ĕç хатĕрĕсем çук. Йăлтах хамăн тумаллаччĕ, хам пĕлсе...” – аса илет Станислава Лещинска.

Каярахпа ăна, чăн та, кунта çакланнă врачсем Ирена Конечная тата Ирена Бялувна пулăшма пуçланă. Станислава тифпа чирлесен те ăна вилĕмрен çăлса хăварнă вĕсем. Врач аллинче вара аспирин темиçе пачки кăна пулнă.

“3 пин ытла хĕрарăма çăмăлланма пулăшрăм эпĕ. Йĕри-тавра таса мар, хурт, йĕкехÿре, инфекци чирĕсем, шыв çитмест... Мĕн кăна пулса иртместчĕ унта! Пĕррехинче эсесовец врач мĕн чухлĕ хĕрарăм тата ача вилнине ыйтрĕ. Манăн пĕр вилĕм те пулманнине пĕлсен вăл ĕненмесĕр пăхрĕ – Германи чи чаплă клиникисенче те инкексĕр пулмасть-çке. Унăн куçĕнче кĕвĕçÿпе тарăхăва кăна асăрхарăм. Йăшса çитнĕ организм бактерисемшĕн те кăсăклă мар курăнать...”

Ача амăшĕсем хăйсене панă çăкăра кĕпесемпе улăштарнă, вĕсене чĕрсе пепкисене чĕркенĕ. Çума та йывăр пулнă – баракран тухма тата шалта та хăйсен тĕллĕн ним тума та юраман. Ача чĕркемелли татăксене хĕрарăмсем хăйсен кĕлеткисем тавра яваласа типĕтнĕ.

“1943 çулччен лагерьте çуралнă ачасене тÿрех каткара путаратчĕç – çак ĕçе Кларăпа Пфани медсестра пурнăçлатчĕç. Пĕрремĕшĕ акушерка пулнă, лагере ача вĕлернĕшĕн çакланнă. Вăл барак старостиччĕ. Çăмăлттайлăхпа палăрнă Пфани ăна пулăшатчĕ. Кашни хĕрарăм çăмăлланмассерен вĕсен пÿлĕмĕнче шыв шампăлтататчĕ. Çакăн хыççăн амăшĕ ачине курма пултаратчĕ – вилене баракран кăларса ывăтатчĕç те йĕкехÿресемшĕн уяв çитетчĕ. Мĕскĕн амăшĕн чĕри мĕнле чăтатчĕ-ши?

Чĕрĕ хăварнă пепкесен те шăпи ăмсанмалла марччĕ – вĕсем выçăпа майĕпен вилетчĕç. Ÿчĕсем çÿхелсе пынипе шăнăрĕсем, юн тымарĕсем, шăммисем курăнакан пулатчĕç. Тĕлĕнмелле те, Совет Союзĕн хĕрарăмĕсен – вĕсем вара кунтисен йышĕн 50 проценчĕччĕ – пепкисем пурнăçран ытла та хытă çакланма тăрăшатчĕç”.

Мĕншĕн-ха акушерка 20 çул ытла чĕнмесĕр пурăннă? Çапах та мĕнле сăлтавпа калаçма пуçланă? Обществăра пулса иртекен улшăнусем хистенĕ хĕрарăма. Польша ют çĕршыв ĕçĕсен министрне ĕненес тĕк, сăмахран, Освенцима Украина ирĕке кăларнă-мĕн. “Тăван çĕршывăмра тах та пурнăçа хирĕçле ĕçсем пуçлансан пĕтĕм акушера тата ашшĕ-амăшне ача правине хÿтĕлеме чĕнсе калатăп”, – 20 çул каялла каланă сăмахсем ытла та пророкла янăрать.

## Качча тухман хĕрĕн чун асапĕ

“Лагере лекнĕ чухне эпĕ хĕрлĕхе çухатманччĕ-ха, çавăнпа та хытă хăраттăм. Пире машинăпа илсе кайрĕç. Пирĕн умра пыраканнинчен темĕнле икĕ япала тухса ÿкрĕ. Какай пулĕ терĕмĕр. Лайăхрах пăхатпăр та – çын кĕлеткисем. Çаппа-çарамас. Шăммипе тирĕ кăна. Çапла пуçланчĕ Освенцим. Тата маларах кайсан траншейăра çынсен кĕлеткисене çунтарнине куртăмăр – унта хурăн вутти пăрахса тăраççĕ. Çав тамăка паян лекнĕ тĕк хăранипех вилеттĕм пулĕ. Ун чухне çамрăк пулнă çав. Пуçра пĕртенпĕр шухăшчĕ: “Чĕрĕ юлмалла...”

Душра малтан вĕри-вĕри шыв юхать, унтан – пăр пек сивви. “Селекци” ку. Унтан урай таçта шума пуçларĕ те çурмалла пайланчĕ. Хамăр шăп та лăп кăмака тăрринче тăнине куртăмăр... Унтан тепĕр пÿлĕме илсе кайрĕç – мунча пеккине. Çынсене çÿлĕксем тăрăх çÿлелле хăвалаççĕ, чăтма çук вĕри. Эпĕ урайне выртрăм, ман çине çÿлтен çын кĕлетки çумăр пек çăвать...”

Çакăн хыççăн та чĕрĕ юлнисене ĕçе хăвалама пуçланă. “Арçынсемпе хирĕç пулсан пĕр-пĕрин енне çурăмпа çаврăнса тăма хушатчĕç. Унсăрăн та арçын шухăшĕ пачах пулман – ахăртнех, апата темĕн хушатчĕç. Лагерьти пĕр /!/ хĕрарăмăн та уйăх хушши пулман. Чĕрĕ юлсан ача çуратаймасран питĕ хăраначчĕ. Киле таврăнсан та чылай вăхăт йĕркеленсе çитеймерĕ организм. Телее, каярахпа качча тухса ача çуратрăм. Халĕ мăнуксен ачисем те пур”.

Екатерина Давыденкова, Освенцим тамăкĕнчен чĕрĕ тухнă хĕрарăма çапла чĕнеççĕ, полячкăсем ирĕклĕрех пулнине палăртать. Вĕсен посылкăсем илме те юранă. Анчах та совет хĕрарăмĕсене вĕсем нихăçан та хăналаман. Катьăн вăрттăн вырăн та пулнă – унта вăл таçта урамра тупнă кашăка упранă. “Освенцима ирĕке кăларнăранпа 30 çул çитнине уявланă чух пире унта экскурсие илсе кайрĕç. Хайхи çав вырăна кĕрсе кайрăм та – кашăк унтах выртать! Калаçайми пулса лартăм. Музее парас тесе Мускава илсе таврăнтăм. Киле çитсен пăхатăп та – нимĕн те çук, йăлт тĕпреннĕ! Мĕншĕн? Паян та пĕлместĕп.

70 çулхине те каяс кăмăл пурччĕ. Чĕнмерĕç. Путина та чĕнмен. Пире те. Кÿренмелле...”

/“Звезда”/.



## И-ХИ-ХИК

Манпа хутшăну нимĕнле те майлашăнмасть-и? Урăх инструктор тупăр.

* * *

Тăшмансемпе кĕвĕçекенсем нумай-и? Апла тăк эсир питĕ лайăх тата кăсăклă пурăнатăр! Начар пурнăçран тупăнмаççĕ вĕсем.

* * *

Хĕрарăмсене ахалех вăрçаççĕ, вĕсем питĕ ырă кăмăллă – арçынсене, айăплă мар пулин те, яланах каçарма хатĕр.

* * *

Упăшкапа вăрçăнтăмăр. Çĕрĕпех пĕр сăмах та хушмарăмăр. Çывăрма та шăппăн выртрăмăр. Тем пулчĕ – сунасларăм. Сурчăк пĕрчи ăнсăртран ăна та çакланчĕ. "Мĕн, çĕленĕм, наркăмăшна сапалама пуçларăн та-им?" – терĕ. Мĕнле тарăхма пулать кун пек чух?

* * *

– Сана ачупа пĕччен йывăр пулĕ ĕнтĕ?

– Мĕн эсĕ? Эпĕ кире пуканĕ мар, телей çуратнă вĕт.

* * *

Арçынсемпе ăнмасть мана – е пĕчĕкрех вĕсем манран, е çамрăкрах...

* * *

Иртнĕлĕхе пуйăс та çÿремест, самолет та вĕçмест. Шел... Эпĕ кайса килнĕ пулăттăм...

* * *

Хĕлле урана ăшă вырăнта тытмалла. Сăмахран, Таиландра...

* * *

Ветеринар практикăна пынă студента вĕрентет:

– Енчен те лашан хырăмлăхĕ начар ĕçлет тĕк çак кĕпçене илетĕн те унăн çăварĕнчен чикетĕн. Кĕпçен пушă вĕçне "Пурген" хуратăн та хыттăн кăна вĕретĕн. Ăнлантăн-и? Атя, кайса ĕçле.

Пĕр сехетрен суллана-суллана çитет хайхи практикант.

– Лашана "Пурген" патăн-и?

– Çук, ĕлкĕреймерĕм, лаша маларах вĕрчĕ...

* * *

Йĕретĕп... Упăшка мана лăплантарма тăрăшса питĕм çинчи куççуль тумламĕсене шăлать. Кур-ха, чунсăрах мар тата хăй. Тĕкĕр патне пыратăп... Йĕксĕк... Куçран юхса аннă тушьпе усси ÿкерсе хунă...

* * *

Пуçăм ыратать. Ĕнер пуçана патĕнче лайăхах хăналаннă çав. Чарăнатăп. Алăк уçăлать те милиционер тăнине курах каятăп. Хăраса ÿкнипе алă хăех енчĕк енне тăсăлать. Ун енне укçа тăсатăп. Вăл илет. Тапранса кайсан кăна хам лифтра пынине аса илетĕп...

* * *

Ватă кашкăр çамрăккине вĕрентет:

– Хĕрлĕ калпаклă хĕрачана курсан çаврăнса пăхмасăр тар, унсăрăн тирне сĕвĕç...

* * *

– Итле-ха, Толя, ирхине мухмăрла пуç ыратнинчен эсĕ мĕн тăваттăн? – ыйтать ĕçме пăрахнă упăшкинчен арăмĕ.

– Эсĕ лăкăртатнине итлеттĕм...

* * *

– Пуянсемпе туслашсан аванрах.

– Мĕншĕн?

– Кивçен, чăн та, памаççĕ, анчах та хăйсем те ыйтмаççĕ.

* * *

Совет тапхăрĕ. Çамрăк инженер авланнă. Шалăвĕ – 120 тенкĕ. Мĕнле пурăнмалла унпа? Пĕтĕм укçана арăма парса тăмалла тата. Юлташсемпе сăра мĕнпе ĕçмелле капла? Кашнинчех арăмран ыйтса илмелле-и? Мĕн те пулин шутласа тупмаллах.

Хайхи арăмне ăнлантарать. Çарта унăн айăпĕпе танк арканнă-мĕн. Халĕ, тăкака саплаштарас тесе, çар комиссариачĕ унран кашни уйăхра 20 тенкĕ шыраса илмелле тунă.

Юрать, арăм та çынах, ăнланать – çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçламалла.

Çапла 10 çул иртет. Ачасем ÿсеççĕ. Вĕсемпе пĕрле – тăкаксем те. Хĕрарăм текех чăтаймасть – мĕн, 10 çул каялла пулнă инкекшĕн халĕ ĕмĕр тăршшĕпех шар курса пурăнмалла-и? Так, çар комиссариатне каймалла, ку ыйтăва вырăнта татса памалла.

Арçын хирĕçлесе нимĕн те калаймасть: ара, капла çемьене 10 çул улталаса пурăнни çиеле тухать-çке.

Çар комиссариатне çитеççĕ. Комиссар ăнланакан арçын-мĕн тата. Хĕрарăма тĕплĕн итлесе пĕтернĕ хыççăн тухма хушать – халĕ арçын калаçăвĕ пулĕ. Алăк хупăннă хыççăнах хайхи арçынна тустарма пуçлать – вăт, намăссăр, çемьерен 10 çул уйăхсерен 20 тенкĕ вăрласа пурăнать. Мĕншĕн-ха тата? Танкшăн! Вăл, комиссар, çарта шывай киммине путарнăшăн та паян патшалăха 10 тенкĕ кăна "тÿлет"!

Аранах лăпланнă хыççăн комиссар çапла сĕнет /çапах та арçын арçынна ăнланать вĕт-ха.../ Ăна – арăмне кăтартмашкăн – справка çырса парĕç. Унпа килĕшÿллĕн 10 тенкĕ кăна "тÿлемелле" пулĕ малашне. Сăра ĕçмешкĕн çитет...

Çапла килĕшеççĕ те. Арçын коридорта кĕтекен арăмĕ патне тухать. Лешĕ ун куçĕнчен шанăçпа тинкерет.

– Мĕн пăхатăн! – тарăханçи пулать арçын. – Çÿретĕн кунта тĕрĕслĕх шыраса. Акă кур, – арăмĕ енне хайхи справкăна тăсать. – Тата 10 тенкĕ хушса пачĕç. Йăлтах – сана пула!

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

АУ "Издательский дом "Хыпар"
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати
Справки по телефонам:
28-83-70, 56-04-17.



**Подарите Вашим рукам «Любаву»!**

Уникальный крем для ухода за руками «Любава» оказывает на кожу мощное благотворное действие: предохраняет от сухости, образования трещин, омолаживает, увлажняет и питает кожу, придает ей эластичность и красоту. Он легко наносится и прекрасно впитывается, делает кожу бархатистой и нежной. Ускоряет заживление царапин и трещин (в т. ч. на пятках и ступнях), размягчает мозоли, регенерирует кожу после повреждений, ожогов и т.д. Крем **«Любава: формула 4+4»** обогащен ионами серебра, в его состав входят 4 натуральных экстракта (ромашки, конского каштана, свеклы и календулы) и 4 натуральных масла (пальмовое, соевое, миндальное и масло ши). Благодаря такому сочетанию крем обладает улучшенными противовоспалительными, регенерирующими и защитными свойствами (в т.ч. от мороза, ветра, солнца), еще лучше увлажняет, питает и смягчает кожу. При всем этом крем **«Любава: формула 4+4»** сохраняет доступную цену.



**Крем «Любава: формула 4+4» реализуется в отделениях почтовой связи.**

*На правах рекламы.*

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**19.ДОМ с участком** в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**65.КРС** – коров, бычков; **лошадей, тёлок.** Т. 8-903-389-85-72.

**66. КРС – коров, бычков;** лошадей, тёлок. Т. 8-961-345-05-28.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 89613393363.

**17.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, навоз. Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**20.Кирпич, к/блок.** Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень. Д-ка.** Т. 89033225766.

**53.ОТРУБИ, зерно, к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозем. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**89. БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**25.Чăнкă тамада.** Т. 8-937-393-57-79.

**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### ĔÇ РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

- Пусма çинчи сĕт йĕрĕ кайтăр тесен япалана çăвиччен сивĕ шывра ислетмелле.
- Сăра йĕрĕ ăшă шывра çухалать.
- Мăйăр хуппипе вараланнă алла çутатма лимон пулăшать.
- Мăйăр хуппи пусма таврашне варалансан ăна уксуспа спирт /1:3/ хутăшĕпе сăтăрмалла.
- Кăвакарнă пусма таврашне йÿçнĕ сĕтре ислетмелле. Унтан çумалла.
- Чăмлак хăть те мĕнле пусма таврашĕ çинчен те шăнтсан хăпăнать.

«ХЫПАР»
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш Хĕрарăмĕ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8101. Заказ 404.